*Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр!*

# Хресчен сасси

2016 раштав 29

51 (2638) [1]

Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН


**Хаклă ентешĕмсем!**

**Сире Çĕнĕ 2017 çул ячĕпе тата Христос çуралнă çутă кунпа пĕтĕм чĕререн саламлатăп!**



Иртнĕ çула эпир Чăваш Енре пурăнакан ĕçчен халăха мухтас тĕллевпе Ĕç çыннин çулталăкĕ тесе пĕлтертĕмĕр. Ĕç çыннисем кунсерен паттăрлăх кăтартнине тивĕçлипе хакласа эпир пурнăç пахалăхĕн шайне ÿстерме май паракан, обществăпа политика лăпкăлăхне упракан тата çирĕплетекен тĕрлĕ программăна пурнăçлас ĕçе малалла тăсрăмăр.

Чăваш Республики Раççей Федерацийĕн инвестици тĕлĕшĕпе чи илĕртÿллĕ ултă субъекчĕ йышне кĕчĕ.

Республикăра хальхи йышши ача сачĕсемпе шкулсем, фельдшерпа акушер пункчĕсем, поликлиникăсем, сывлăха çирĕплетме пулăшакан физкультура комплексĕсем нумайланчĕç. Социаллă тĕллевлĕ политикăна пула нумай ачаллă çемьесен тата вăрăм ĕмĕрлисен шучĕ палăрмаллах ÿсрĕ.

Паян вара пирĕншĕн çемьене тата халăхăмăрăн пĕрлĕхне мĕн авалтан пыракан ырă йăла-йĕркене тĕпе хурса çирĕплетесси тĕп тĕллев пулса тăчĕ. Шăпах çакна пула, общество организацийĕсем сĕннине шута илсе, 2017 çула Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкĕ тесе пĕлтертĕмĕр.

Раççей Президенчĕ Экологи çулталăкĕ тесе йышăннă 2017 çул кашни çыншăнах çут çанталăка çеç мар, чун тасалăхне те упрас тĕлĕшпе аталану çулĕ пулса тăтăр.

Хаклă туссем!

Çĕнĕ çулта эпир сирĕнпе тăван Чăваш Енĕмĕрĕн экономикипе социаллă пурнăçне тата çине тăрса аталантарасса шансах тăратăп!

Эсир шанни, ĕмĕтленни пурнăçлантăр! Сирĕн килĕрсенче яланах ача-пăча кулли янăратăр, унта чун ăшши хуçалантăр!

Çĕнĕ 2017 çулта эпĕ сире ăнăçупа тăнăçлăх тата телейпе ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**Михаил ИГНАТЬЕВ.**

*ЫРĂ ПУЛĂМ*

# Пăрусене – хăтлă вите

– Пуян та ăнăçлă çулталăк пулчĕ, – теççĕ Тăвай районĕнчи «Акконд-агро» пĕрлешÿ ĕçченĕсем.

Çĕршыври кăткăс лару-тăру, чикĕлеш енчен апат-çимĕç турттарма чарни вĕсене тăрăшарах вăй хума, малалла талпăнма хĕтĕртнĕ тейĕн. Хальхи вăхăтра тĕп тупăш вылăх-чĕрлĕх отраслĕнчен ытларах кĕрет. Ăна аталантарма кăçал 50 млн тенкĕ хывнă. Çак тапхăрта икĕ пăру вити, тырă тата утă управĕсем хута кайнă. Сĕт сумалли зала юсаса çĕнетнĕ, цехне анлăлатнă тата ытти ĕçе пурнăçланă.

Сĕт туса илни тăкака саплаштарма, ала çаврăма çитет. Çавăнпа çулсерен кĕтĕве пысăклатсах пыраççĕ. Çак кунсенче савăнăçлă лару-тăрура 250 пăру вырнаçмалăх вите хута кайрĕ.

– «Акконд-агро» фирма ĕне ĕрчетсе районти ял хуçалăх аталанăвĕн çулйĕрне палăртать. Кăçал районти хуçалăхсем вицĕ ферма юсанă, çĕнĕрен иккĕ хăпартнă. Çывăх вăхăтра теприне туса пĕтермелле, – палăртрĕ Тăвай район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Ванерке уява хутшăннă май.

– Автан ир-ирех вăранать. «Ир тăракана Турă та парать», – тенĕ халăхра. «Акконд» пĕрлешÿ тĕп директорĕ Валерий Иванов тăрăшнипе агрофирма та çулсерен вăй илет, – палăртрĕ Валерий Чайкин Тăвайсене ăнăçусем суннă май.

«Акконд-агро» фирма директорĕ Вячеслав Иванов каланă тăрăх – 2016 çулта хуçалăхăн сухаласа акакан лаптăкĕ 3263 гектар йышăннă, çав шутра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем – 1100. Кĕркунне 3021 тонна «сарă ылтăн» выçса кĕртнĕ. Гектарти вăтам тухăç – 27,47 центнер. Кĕрхи культурăсем 260 гектар çинче акса хăварнă. Пысăк кĕтĕве хĕл каçарма утă, сенаж çителĕклĕ хатĕрленĕ. Раштав уйăхĕ тĕлне хуçалăхра вăтамран 4 пин тонна ытла сĕт сунă. Кашни ĕнен кăтартăвĕ вăтамран 5681 килогрампа танлашнă. Ку иртнĕ çулхинчен пысăкрах. Хальхи вăхăтра майракаллă шултра вылăх 1635 пуç, çав шутра сăвăнаканнисем – 773.



Сăнÿкерчĕке сар.ru сайтран илнĕ

**Ферма ĕçченĕсем**

Предприятире тăхăр çул каялла çĕнĕ технологипе малтанхи хут 960 ĕне вырнаçмалăх икĕ вите хута кайнă. Унтанпа лару-тăру палăрмаллах улшăннă. Халĕ кунта вылăх «хули» ÿссе ларнă тейĕн. Чĕртавара вырăнтах тирпейлени компание услам ытларах илме май парать. Кунта хатĕрлесе кăларакан сĕт юр-варне халăх хапăлласах туянать.

Вылăх-чĕрлĕхрен продукци илесси ăратлăхран та килет. 2008 çулта хуçалăх Беларусьран 480 пушмак пăру туяннă. Çавăнтанпа ăратлăха çĕнетсех пыраççĕ.

Нумаях пулмасть виççĕмĕш пăру вити тума пуçланă. Ăна та çитес çул хута ямалла. Çавна май ял çыннисем валли ĕç вырăнĕсем хушăнаççĕ. Хуçалăхра вăй хуракансен уйăхри вăтам шалăвĕ 16 пин тенкĕрен иртнĕ. Ку тăрăхри ялсенче пурăнакансенчен нумайăшĕ агрофирмăра вăй хураççĕ.

Хĕрлĕ хăйăва каснă хыççăн савăнăçлă мероприятие пуçтарăннисем хăтлă витене хаваспах кĕрсе курчĕç. Çĕнĕ технологипе тунăскерте çутă, таса, типĕ. Тислĕк кăларассине, апат парассине йăлтах механизациленĕ. Çавна май фермăра вăй хуракансен ĕçĕ те палăрмаллах çăмăлланнă. Сăмах май, кунта ĕçе вырнаçас текенсем те самай. Вĕсем валли канмалли, çăвăнмалли пÿлĕмсем те пур. Хăтлă вите вылăх-чĕрлĕхшĕн, ĕç çыннисемшĕн Çĕнĕ çул умĕнхи парне пулчĕ тейĕн.

**Лариса НИКИТИНА.**

*КУН ЙĔРКИНЧЕ*

## Ĕçтеш – пĕрремĕш вырăнта

Чăвашстат, ЧР Ял хуçалăх тата ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствисем Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне çутатнă журналистсене палăртас, вĕсене хавхалантарас тĕллевпе конкурс ирттерчĕç. Унта республикăри телерадиокомпанисем, пичет изданийĕсен редакцийĕсем, журналистсем хутшăнчĕç. Конкурса пĕтĕмлетнĕ хыççăн çакă паллă пулчĕ: «Хресчен сасси» хаçат корреспонденчĕ Лариса Никитина «Республикăри пичет кăларăмĕсенче Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне чи лайăх çутатакан» номинацире çĕнтернĕ.

Çавăн пекех палăртма кăмăллă: «Хыпар» хаçат тишкерÿçи Валентина Смирнова та профессири ăсталăхшăн, пуçарулăхшăн ятарлă приза тивĕçнĕ.

Ĕçтешсене чун-чĕререн саламлатпăр!

## Малтисен йышĕнче

Информаци коммуникацийĕсен "Рейтинг" центрĕ "Наци рейтингĕ" проектпа килĕшÿллĕн РФ субъекчĕсен ертÿçисен 2016 çулхи ĕç-хĕлне хакланине сăнлакан тĕпчев кăтартăвне пичетленĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев унта 16-мĕш позици йышăнса 25 регион ертÿçинчен тăракан рейтингăн пĕрремĕш ушкăнне кĕнĕ.

## Пулас ăрусемшĕн

Виçĕм кун Раççей Президенчĕ Владимир Путин Мускавра РФ Патшалăх Канашĕн ларăвне ирттернĕ. Ăна Раççей Федерацийĕнче экологие пулас ăрусем валли аталантарас ыйтăва халлаланă. Çак мероприятие Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.

Çĕршыв ертÿçи влаç органĕсемшĕн кăна мар, бизнес пĕрлĕхĕсен ĕçĕхĕлĕшĕн пĕлтерĕшлĕ тĕллевсем палăртнă. Унсăр пуçне промышленноçра та çут çанталăка ытла наркăмăшлантарман технологисемпе усă курмаллине, производство тата йăла каяшĕсене сиенсĕрлетме тăрăшмаллине каланă.

Палăртмалла, Чăваш Енре экологи тĕлĕшĕнчен пĕлтерĕшлĕ темиçе проект пурнăçланать. Çĕнĕ Шупашкарти тасату сооруженийĕсене тĕпрен юсани тата Шупашкарти "Заовражное" шыв станцийĕнче çут çанталăк каяшĕсене тирпейлекен комплекс туни Шупашкар тата Куйбышев шыв управĕсен экологи лару-тăрăвне лайăхлатать. Унсăр пуçне Çĕнĕ Шупашкарти хальхи йышши полигон çĕршыври чи лайăх инвестици проекчĕ шутланать.

Малашне çÿп-çап тиесе пуçтаракан станцисене республикăн тĕрлĕ районĕнче тума палăртнă.

# Владимир Путин:
# Тĕллевсем пурнăçланаççĕ

**Иртнĕ эрнере Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин йăлана кĕнĕ тăрăх – журналистсемпе пресс-конференци ирттерчĕ. Массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсем çĕршыв экономикипе, унăн тулаш политикипе çыхăннă тата ытти çивĕч ыйтăва хускатрĕç. Тăватă сехете яхăн пынă тĕлпулура Владимир Путин алла яхăн ыйтăва хуравлама ĕлкĕрчĕ.**



kremlin.ru сайт сăнÿкерчĕкĕ

## Экономика

Чи малтанах журналистсене Раççей экономики мĕнле шайра пулни кăсăклантарчĕ. Владимир Путин палăртнă тăрăх – унăн кăтартăвĕ 2015 çулхи танлаштаруран аван курăнать. Пĕлтĕр ВВП виçи 3,7 % чакнă. Кăçал та вăл кăштах пĕчĕкленĕ, анчах ытлашши мар, çулталăкри кăтарту 0,5-0,6 процент кăна чакмалла. Чӳк уйăхĕнче вăл кăшт ÿснĕ.

Çакă экономикăри хăш-пĕр отрасль аталаннипе çыхăннă. Тĕслĕхрен, машинăсем тăвакан, хими, çăмăл тата тирпейлекен промышленноçра. Ял хуçалăхĕнчи ÿсĕм вара самай курăмлă: пĕлтĕр 2,6% пулнă, çак çул малтанласа 3,2 процент палăртнă. Хальхи вăхăта кăтарту – 4,1%. Çулталăкра пĕтĕмĕшле 4 процентран сахал мар пулмалла.

Инфляци шайĕ пĕлтĕр пысăкчĕ. Çакă ял хуçалăхĕнче импорта хамăр таварпа улăштарма ĕлкĕрейменнипе тата ытти сăлтавпа çыхăннă. Халĕ унти лару-тăру аванланни инфляцие витĕм кӳмелле. 2011 çулта унăн кăтартăвĕ чи лайăххи пулнă – 6,1%, кăçал улттăран сахалрах пуласса шантарма май пур.

Президент палăртнă тăрăх – бюджет дефицичĕ кăшт пысăкланни, Правительствăн резерв фончĕ чакни те кулянтармалла мар, мĕншĕн тесен Тĕп банкăн ылтăн тата валюта резервĕсем ÿснĕ.

Капиталăн ытларах пайĕ хамăр çĕршыврах юлни савăнтарать.

Халăхăн тупăшĕ пĕчĕкленни аван пулăм мар, анчах юлашки уйăхсенче экономика тытăмĕсенче шалу ÿсни пурпĕр палăрать.

Социаллă сферăра демографи кăтартăвĕ аван, халăх йышланать. Паллах, ача сахалрах çуралать, анчах çын вилесси чакнă.

Ертÿçĕ шухăшĕпе çĕршыв пĕтĕмĕшле палăртнă тĕллевсем патнех çывхарать. Вĕсем япăх мар пурнăçланаççĕ.

## Чи лайăх кăтарту

Пресс-конференцире иккĕмĕш ыйту панă журналиста ял хуçалăх машинисем тăвакансене малашне субсидипе тивĕçтересси кăсăклантарчĕ. Ку çăмăллăха промышленноç та, ял хуçалăхĕ те хапăлласа йышăннă. Пулăшăва кризис вăхăчĕ хыççăн та тăсма май пур-ши?

Владимир Путин вăл яланлăх пулма пултарайманнине асăнчĕ. Унпа ял хуçалăх машинисем тăвакан тытăма хальхи вăхăтри ыйтусене татса памашкăн тата çирĕп аталану çулĕ çине тăмашкăн пулăшаççĕ.

Çак тытăм лайăх ÿсĕмпе савăнтарать, промышленноçри кăтартура унăн тÿпи пысăк. Анчах пирĕн производствăсен патшалăх субсидийĕпе кăна пурăнмалла мар, хăйсене хăйсем тивĕçтермелле. Çакна мĕнле майпа пурнăçлама пулать? Ял хуçалăхне аталантарса. Тупăш ытларах чух вăл çĕнĕ техника туянма та пултарать.

Хальлĕхе çак туртăм вăйсăртан ăна пулăшмалла. Правительство çитес çул та хăш-пĕр отрасле субсидипе тивĕçтерĕ. Промышленноç валли – 107,5, ял хуçалăхне 216 миллиард тенкĕ уйăрнă.

Ял хуçалăхĕ тенĕрен, пĕтĕмĕшле тухăç кăтартăвĕпе вăл савăнтарчĕ. Юлашки çулсенче 117 миллион тонна тыр-пул пуçтарса илнĕ. Кăçал 119 миллион тоннăран та иртет. Çакă питĕ лайăх. Çавăнпа Владимир Путин ял хăлăхне чунтан тав турĕ. Раççейĕн çĕнĕ историйĕнче кун пекки пулманнине палăртрĕ. Совет тапхăрĕнче, иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче, çакăн чухлĕ тухăç пуçтарнă пулин те апат-çимĕç çитмен.

## Тĕнче шайне те тухĕ

"Хальччен ют çĕршывран турттарнă тавара хамăр патра хатĕрлесе кăларма пултарсан Раççей çĕнтерĕ, пултараймасан вара?..." – ыйту пачĕ Вологда журналисчĕ. Проблемăсен сиксе тухасса хăех пĕлтерчĕ. Владимир Путин та вĕсем яланах пулнине, малашне те пуласса асăнчĕ. Апла пулин те эпир çĕнтерессех, кун пирки пач иккĕленменнине палăртрĕ. Импорта улăштарни ырă çимĕç кӳрет. Промышленноçра ют çĕршыв таварне туянасси 10 процентлă пункт чухлĕ чакнă. Малтан вăл 49-па танлашнă, халĕ – 39. Фармацевтикăра, хими, çăмăл промышленноçра, йывăр машинăсем, чукун çул техники тăвас тытăмсенче те ку тĕлĕшпе ÿсĕм пур. Хӳтĕлев промышленноçĕнче, ял хуçалăхĕнче те çаплипех. Кăçал ял хуçалăх производстви ÿсни инфляци шайне чакарма май парĕ. Раççей экономики пысăк технологисемпе хăй хальлĕн кăна аталанмĕ, вăл тĕнче шайне те тухĕ.

## Налуксем

"Налуксене тупăшран, куçман пурлăхран илеççĕ. Вĕсем майĕпен ÿссех пыраççĕ. Анчах налуксăр пуçне тĕрлĕ ĕçшĕн укçа пуçтараççĕ. Тĕслĕхрен, çурта тĕпрен юсама. Медицина тӳлевсĕр пек, анчах хăш-пĕр пулăшушăн тӳлемелле. Вĕренӳре те хушма пĕлӳшĕн çапла тумалла тата ытти те. Президент çакăн çинчен пĕлет-и? Тата мĕнле кĕтменлĕх пулма пултарать?" – кăсăкланчĕ "Пĕрремĕш канал" телекуравĕн репортерĕ.

Граждансенчен илекен тĕп налуксем виçĕ тĕрлĕ (НДФЛ, транспорт тата пурлăх) пулнине палăртрĕ Президент. Тупăшран илекенни 13 % танлашать. 2001 çулта ăна пурнăça кĕртме тытăннă чух иккĕленӳ пулман мар. Нумай ĕçлесе илекеннин сахалрах тӳлеме тивнĕрен бюджета кĕрекен тупăша çухатасси шиклентернĕ тата ытти те. Анчах пурнăç кăтартнă тăрăх – çак налукшăн тӳлекен укçа виçи 7 хут ÿснĕ. Вĕсем социаллă ыйтусене татса пама каяççĕ.

Владимир Путин шухăшĕпе уйрăм çынсен тупăшне налук тăрăх тĕрлĕрен хакласси çине куçма иртерех.

Налук шутне кĕмен пуçтарусем çинчен Президент пĕлет, паллах. Анчах унашкаллисене, тарифсене муниципалитетсен е федераци субъекчĕсен шайĕнче çирĕплетеççĕ. Ку тĕлĕшпе ыйтăва татса пама Правительствăна тепĕр çул налук шутланман тӳлевсен реестрне хатĕрлеме хушнă. Çакă çĕршывра, регионсенче тата муниципалитетсенче укçа тӳлевĕ тĕлĕшĕнчен мĕнле лару-тăру пулнине тĕрĕсрех тата лайăхрах ăнланма пулăшмалла. Федераци шайĕнче вара тариф ÿсессине чарнă.

## Экологи яланхиллех пĕлтерĕшлĕ

2017 çула Раççей Президенчĕ Экологи çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Унăн тухăçлăхне ÿстерме журналистсенчен пĕри РФ посольствисен çумĕнче экологи пайĕсем йĕркелеме сĕнчĕ. Хĕвеланăç çĕршывĕсем, ун шухăшĕпе, экологи теминчен пăраннă. Раççей вара ăна малти вырăна кăларать . Унсăр пуçне çĕршыври телеканалсенче экологи политикине улăштармалла: ытларах унпа, патриотлăхпа çыхăннă передачăсем кăтартни çыннăн тĕнчекурăмне пуянлатать.

Владимир Путин Хĕвеланăçĕнче çут çанталăка упрассишĕн сахал тăрăшнипе килĕшмерĕ. Тĕслĕхрен, Франци Президенчĕ атмосферăна наркăмăшлантарассине чакарас тĕлĕшпе çĕршывсемпе килĕшӳ тăвассипе нумай вăй хунă. Раççей те хăйĕн çине тивĕç илнĕ, ăна пурнăçласса шанать.

Хамăр çĕршывăн шалти политикинче экологи – чи пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри. Тавралăх вараланни, темĕн çӳллĕш çӳп-çап куписем хăйне пăшăрхантарнине Президент пытармарĕ. Кун çинчен нумаях пулмасть Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн форумĕнче тĕплĕ калаçнине, тĕллевсем лартнине палăртрĕ.

Вăрмансене упрамашкăн хальхи саккуна улшăнусем кĕртмесĕр май çук-мĕн. Халăх пурăнакан таврашри вăрмансене, парксене сыхламасан нимĕнсĕр тăрса юласса асăнчĕ Владимир Путин. Ку ĕçре массăллă информаци хатĕрĕсемпе те тачă çыхăнса ĕçлемеллине палăртрĕ.

## Пенси

Срокран маларах пенсие тухакансен хăйсен правине судра хӳтĕлени сайра мар иккен. Çавна кура ку енĕпе саккуна улшăнусем кĕртме вăхăт çитмен-ши? Çитес çулта пенсионерсене мĕн кĕтет?

Çак ыйтусене хуравланă май Владимир Путин малтан пенси шутласа панă чух стажа, ĕç укçи виçине шута илменнине аса илтерчĕ. Çакнашкал танлаштарни тĕрĕс марри пирки çынсем уççăнах каланă. Хальхи пенси тытăмĕ виçĕ пайран тăрать: стаж, тивĕçлĕ канăва тухиччен илсе тăнă шалу виçи тата пенси илме тытăннă ÿсĕм çулĕ.

Срокран маларах пенсие тухассипе çыхăннă ыйтăва тĕплĕ тишкермелле. Кун пек категорие лекекен çын нумай. Владимир Путин ку тĕлĕшпе йышăнакан çĕнĕлĕхсене малтан халăхпа сӳтсе явмаллине палăртрĕ.

2017 çул пуçламăшĕнче мĕнпур пенсионер 5 пин тенкĕ укçа илĕ. Хăшĕпĕриншĕн ку тӳлев çулталăкри индексаци виçинчен те пысăкрах пулĕ. Çитес çулта ватлăхшăн паракан пенсие нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчен индексацилеме бюджетра укçа уйăрнă. Ун хыççăн социаллă пенсисене те индексацилĕç.

**Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.**

## АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

**Кăçал ялта ĕçлекенсен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатма бюджетран 113,8 млн тенкĕ уйăрнă. Çак укçапа 162 ял çыннине çурт-йĕр тума свидетельство панă, çав шутра 77,48 млн тенкине – 109 çамрăк çемьепе специалиста (хисепĕн 71,3 проценчĕ).**

**Патшалăх пулăшăвĕпе усă курнисен йышĕнче агропромышленность комплексĕнче вăй хуракансем – 64, социаллă сферăра – 35, ытти отрасльте 39 процент.**

**Çамрăк çемьесемпе специалистсене патшалăх пулăшăвне панă чухне вĕсем ялта ĕçлесе пурăнма кăмăл тунине шута илеççĕ. Тĕп условисенчен пĕри – агропромышленность комплексĕнче тата социаллă сферăра свидетельство илнĕ хыççăн пилĕк çултан кая мар ĕçлемелле.**

***

**Чăвашстат кăтартăвĕпе кăçал республикăри хуçалăхсем 609,2 пин тонна тыр вырса çапнă. Ку юлашки 15 çулти чи пысăк кăтарту. Кĕрхи культурăсем хĕл ăнăçлă каçни (пурĕ 1,5 процент кăна пĕтнĕ, ытти çулсенче – 7-8 процент), калча вăй илнĕ тапхăрта çанталăк лайăх тăни, республикăри**

*ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ*

# Программăна пурнăçлама

Патшалăхăн "Земство тухтăрĕ" тĕллевлĕ программа 2012 çултанпа пурнăçа кĕрсе пырать. Ăна ялти халăха пахалăхлă медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерме йĕркеленĕ. Аса илтерер, яла е ĕç поселокне, е тата хула йышши поселока хуларан е урăх вырăнтан куçса ĕçлеме килнĕ специалистсене компенсаци тӳлевĕпе хавхалантараççĕ. Унăн виçи 1 миллион тенкĕпе танлашать.

Нумаях пулмасть Раççей правительстви çак программăна малалла тăсса тухтăрсене ялта вырнаçса ĕçе пуçăнмашкăн çитес çул валли 3,2 миллиард тенкĕ уйăрнă. Медицина ĕçченĕсене паракан тӳлевпе регионсен заявкисене кура тивĕçтереççĕ. Укçа-тенкĕпе ФОМС бюджечĕ – 60, регион 40 процент чухлĕ финанслать. 2017 çулта Чăваш Республики тĕллевлĕ программăна пурнăçлама 15 млн тенкĕ илет.

Пĕр хут паракан тӳлеве 2016 тата 2017 çулсенче яла е поселока ĕçлеме килнĕ, 50 çула çитмен, аслă пĕлӳ илнĕ медицина ĕçченĕсене параççĕ.

Программа пурнăçланма тытăннăранпа Чăваш Енри ялсенче 315 тухтăр ĕçе вырнаçнă, çав шутра 37-шĕ – 2016 çулта.


Николай Николаев

**Нумаях пулмасть республикăра ĕçре инкек тӳснĕ 9 çынна çăмăл машинăпа тивĕçтерчĕç. Вĕсене савăнăçлă лару-тăрура çĕнĕ автомобильсен уççине пама РФ Социаллă страховани фончĕн регионти уйрăмĕн управляющийĕ Галина Николаева, ЧР ĕçлев тата социаллă хӳтлĕх министрĕн заместителĕ Виктор Ковалев, ЧР Общество палатин председателĕ Алексей Судленков хутшăнчĕç.**


Николай Мрчеев

# Çĕнĕ çул умĕнхи парне

Галина Николаева каланă тăрăх – хальхи вăхăтра производствăра инкек курнипе ĕç пултарăвне çухатнă 5 пин çын фондăн регионри уйрăмĕ урлă уйăхсерен тӳлев илсе тăрать. Вĕсенчен 3 пинĕшне реабилитацилемелли тăкака та социаллă страховани фончĕ хăй çине илнĕ.

– Страхлав тӳлевĕ илсе тăракансем пурте çирĕп кăмăллă, шанăçа çухатман çынсем. Фондăн регионти уйрăмĕ сусăрсемпе тимлĕ пулма, вĕсене пулăшма тăрăшать, – терĕ вăл.



Федерацин 1998 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнчи «Производствăри инкек-синкекрен тата професси чирĕсенчен обязательнăй социаллă страховани тăвасси çинчен» 125-мĕш саккунĕпе килĕшӳллĕн ĕçре сусăрланнисене машинăпа тивĕçтереççĕ. 2000 çултанпа фондăн регионти уйрăмĕ реабилитаци программипе производствăра инкек курнă, хăйсем тĕллĕн çӳреме пултарайман 132 çынна транспортпа тивĕçтернĕ. Çав шутран кăçал – 14. Ăна валли 6,6 млн тенкĕ уйăрнă. Маларах пилĕк çын машинăллă пулнăччĕ.

Хальхинче вĕсем Шупашкар, Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Муркаш, Куславкка, Елчĕк районĕсенчен çитнĕ. Пурте тĕрлĕ вăхăтра ĕçре сусăрланнисем, çав шутра утайманнисем те пур. Çавна май автомобиле кашнин сывлăхне кура туса хатĕрленĕ. Икĕ çын «хурçă ута» пĕрремĕш хут тивĕçрĕç. Çиччĕшĕ унччен те илнĕ-мĕн. Машина салонĕ ирĕклĕ, кондиционер вырнаçтарнă, багажникĕ пысăк. Транспортпа 8 çул таран усă курма пултараççĕ. Унтан медицинăпа социаллă экспертиза учрежденийĕ ирĕк парсан фонд инвалидсене çĕнĕ техникăпа тивĕçтерет.

Реабилитаци программипе килĕшӳллĕн производствăра инкек тӳснисем санаторипе курортра тӳлевсĕр сипленме, эмел туяннă тăкака саплаштарма, протезпа ортопеди тата реабилитаци хатĕрĕсемпе усă курма пултараççĕ. Вĕсене çунтармалли-сĕрмелли материалсем туянма кайнă тăкака та компенсацилеççĕ. Çак тапхăрта машинăна тĕпрен юсамашкăн пĕр хутчен укçа параççĕ.

– Вĕсем унччен те пулнă-ха: «Ока», «Жигули». «Lada Granta» – фондран илнĕ виççĕмĕш машина. Техника маншăн çур пурнăç, алă-ура пекех. Халăхпа хутшăнма кăна мар, ĕçре те кирлĕ. Унпа тырă, ытти япала турттаратăп, кăмпана çӳретĕп, – терĕ Патăрьел районĕнче пурăнакан Николай Николаев. – Кресло-кӳмепе килтен тухсах çӳреймĕн.

Вăл 80-мĕш çулсенче ĕçрен таврăннă чухне çул-йĕр аварине çакланнă. Çамрăк каччăна тухтăрсем вилĕм аллинчен туртса кăларнă, анчах ĕмĕрлĕхех сусăрланса юлнă, утайми пулнă.

– Инкеке пула çемье те çавăраймарăм, аннепех пурăнатпăр, – терĕ Николай Николаев. – Юрать, юлташсем пур, пăрахмаççĕ. Патшалăх та пире манмасть, пулăшсах тăрать.

Муркаш районĕнчи Николай Мрчеев та 80-мĕш çулсенче «Сеятель» хуçалăхра тăрăшнă чухне йывăр аманнă.

– Колхоз çĕнĕ комбайн туянчĕ, унпа ĕçлеме вĕренмен пулин те мана шанса пачĕç. Икĕ çул чиперех вăй хутăм-ха, анчах виççĕмĕшĕнче инкеке лексе сылтăм урасăр юлтăм, – аса илет иртнине вăл. – Малтан «Запорожец» машина уйăрчĕç. Кайран укçан илтĕм. Халĕ, ватăлнă май, тухса çӳреме йывăрланчĕ, çавăнпа машинăсăр кансĕр.

Улатăр районĕнчи Виктор Старостин фондăн регионти уйрăмне, республика правительствине сусăр çынсен ыйтăвĕсене татса пама пулăшнăшăн чĕререн тав турĕ.

«Хурçă ута» илме вĕсем тăванĕсемпе килнĕ. Çĕнĕскерсемпе тӳрех вăрăм çула тухма тăхтарĕç, ăна çывăх çыннисене шанса пачĕç. «Малтан унпа çӳреме хăнăхмалла», – терĕç вĕсем.

**Лариса НИКИТИНА.**

**аграрисем пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем туса илнĕ. Çĕрте çĕнĕ технологипе усă курни, акакан лаптăксем ӳсни (292,9 пин гектар е 2015 çулхин 100,8 проценчĕ) кăтартăва пысăклатнă.**

**Кăçал теплицăра пахчаçимĕç туса илесси те палăрмаллах ӳснĕ. Пурĕ 175,5 пин тонна пуçтарса кĕртнĕ (116,8 процент).**

**Нумаях пулмасть «Ольдеевская» агрофирмăра (Шупашкар районĕ) çĕнĕ теплица хута кайнă.**

***

**2016 çулхи 11 уйăхра республикăри мĕнпур категорири хуçалăхсен продукцин калăпăшĕ 44 млрд тенке çитнĕ. Ял хуçалăх производствин индексĕ 101,6 процентпа танлашнă. Çак тапхăрта аш-какай – 108,9 пин (пĕлтĕрхи ку вăхăтрин 106,8 проценчĕ), сĕт 396,4 пин тонна (100,05 проценчĕ) туса илнĕ.**

*ТАВ ÇĂМАХĔ*

# Çырăр, шăнкăравлăр, кĕрсе тухăр

Упăте çулĕпе сывпуллашатпăр, Автана алă паратпăр. Паллах, малашлăхра ыррине кăна шанатпăр. Çĕнĕ çул сывхарнă май вулакансене пурне те уяв ячĕпе ăшшăн саламласа çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, ăнăçу, тăнăç пурнăç сунатпăр. Пирĕнпе çыхăнăва татманшăн, çитес çул та пĕрле пулнишĕн чĕререн тав тăватпăр.

Хаçата кăсăклă тума общество корреспонденчĕсем чылай пулăшаççĕ. Вĕсене ятран асăнса хăварас килет: **Петр Сидоров, Альбина Макеева, Надежда Васильева, Александр Мокин, Александр Ильин (Шупашкар хули), Илья Яковлев, Александр Макаров (Муркаш районĕ), Вячеслав Перов (Çĕнĕ Шупашкар хули), Геннадий Савельев, Владимир Егоров (Элĕк районĕ), Анатолий Максимов-Пукаш (Сĕнтĕрвăрри районĕ), Иван Ерофеев, Александр Леонтьев, Ольга Павлова (Патăрьел районĕ), Юрий Корнилов (Элĕк районĕ), Надежда Наумова (Вăрнар районĕ), Татьяна Борисова (Красноармейски районĕ), Николай Агаков (Канаш районĕ), Мария Петрова (Тăвай районĕ)** тата ыттисем те. Малашне те пирĕн пата çырсах тăрăр, шăнкăравлăр, килсе çӳрĕр. Саламăрсем пире çунат хушаççĕ, ĕçлеме хавхалантараççĕ. Çавăнпа та сире пĕтĕм кăмăлтан тав тăватпăр.

Автан çулĕ пуриншĕн те ăнăçлă ирттĕр. Çак кайăк хресченшĕн ют мар. Кил-тĕрĕшре чи малтан вăранать вăл, ыттисене тăратать. Ахальтен мар хресчен çула тухиччен вăл автăнине кĕтсе илнĕ. Автан иккĕмĕш хут юрласан хĕрарăмсем çăкăр пĕçернĕ. Виççĕмĕш хутĕнче вара пĕтĕм ял ĕçе пуçăннă. Эппин, хамăр та харсăр, патвар пулар.

**«Хресчен сасси» хаçат редакцийĕ.**



# Автан пек хастар пулар!

Хĕл сивви шатăртатать,
Кашкăра та хăратать.
Ĕç çынни ĕçе васкать,
Хăй валли тупăш тăвать.

Чăваш çынни хăрамасть,
Хаяр сивве парăнмасть.
Ĕмĕтне вăл пурнăçлать,
Хăйĕн телейне тупать.

Автан çулĕ çывхарать,
Кивĕ çулĕ хурланать.
Çĕнĕ çула çĕнĕлле,
Çĕн тĕллевпе кĕтмелле.

Автан пек хастар пулар!
Автанпа пĕрле тăрар.
Ĕçлесе нухрат пухар,
Пурнăçпа шав савăнар!

Çĕнĕ çултан ыррине,
Кĕтетпĕр лайăххине.
Пурнăç пултăр тулăхрах,
Çăмăлтарах, савăкрах.

**Николай АГАКОВ. Канаш районĕ.**

ХӐТЛĔХ

# Уйăхсеренхи тӳлев пысăкланать

Чăваш Республикин 2016 çулхи раштав уйăхĕн 20-мĕшĕнче йышăннă саккунĕпе килĕшӳллĕн 2017 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вăрçă вăхăтĕнчи тыл ĕçченĕсене, ĕç ветеранĕсене, Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсене, реабилитациленĕ тата политика репрессийĕсене пула шар курнă çынсене уйăхсерен тӳлекен укçа виçи ӳсет.

Çитес çултан тыл ĕçченĕсем уйăхсерен – 1044, ĕç ветеранĕсем тата Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсем – 1100, реабилитациленĕ граждансем – 2634, политика репрессийĕсене пула шар курнисем 2345 тенкĕ илме тытăнĕç.

Унсăр пуçне ĕç ветеранĕсене тата Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсене страхлав пенсийĕ çирĕплетнĕ хыççăн – вĕсем малалла вăй хунине е ĕçлеме пăрахнине пăхмасăр – вырăнти телефон çыхăнăвĕпе усă курнăшăн тăкакăн 50 процентне укçапа саплаштараççĕ. Вĕсем ĕçленĕ чух çӳренĕ (çирĕпленнĕ) медицина организацийĕсенчех медпулăшу илме пултараççĕ. Çавăн пекех Чăваш Республикинчи граждансене тӳлевсĕр пулăшу памалли патшалăх гарантийĕн программи шайĕнче черетсĕр медицина пулăшăвĕ илмелли право та упранса юлать.

# Саккуна улшăнусем кĕртнĕ

Чăваш Республикинче виççĕмĕш ача тата ун хыççăнхисем çуралсан (усрава илсен) вĕсем виçĕ çула çитиччен уйăхсерен укçа тӳлемелли саккуна улшăнусем кĕртнĕ. Халĕ Чăваш Республикин 2016 çулхи раштав уйăхĕн 20-мĕшĕнче йышăннă 104 № саккунĕпе килĕшӳллĕн патшалăхăн хушма пулăшăвне ача 2016 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕччен çуралсан (усрава илсен) кăна параççĕ.

2014-2016 çулсенче çуралнă виççĕмĕш тата ун хыççăнхи ачасемшĕн уйăхсеренхи укçана вĕсем виçĕ çул тултариччен яланхи пекех тӳлеççĕ.

Хальхи вăхăтра уйăхсеренхи тӳлев 8596 тенкĕпе танлашать. 2016 çулхи раштав уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăна тин çуралнă (усрава илнĕ) 5666 ача валли çирĕплетнĕ, çав шутра 1813-шĕ – кăçал кун çути курнă (усрав çемьене килнĕ).

Çӳлерех асăннă тапхăр тĕлне çак тĕллеве пурнăçлама 590 млн тенкĕ уйăрнă, ку шутра федераци бюджетĕнчен – 333,7 млн тенкĕ, Чăваш Республикин хыснинчен – 256,3 млн тенкĕ.

Палăртмалла, Чăваш Республикинче ачаллă граждансене патшалăх пособийĕ памалли çинчен калакан саккуна та улшăнусем кĕртнĕ. 2017 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ашшĕ-амăшĕ (ача усрава илнĕ çын, опекун, патронат воспитателĕ тата ытти те) ачашăн уйăхсерен илекен пособи виçи пысăкланать.

Кăçалхипе танлаштарсан çитес çул вăл ашшĕ-амăшĕшĕн – 324, опекуншăн (попечительшĕн), патронат воспитательшĕн, ачана хăйсен хӳттине илнĕ ашшĕ-амăшĕшĕн 1524 тенке çитет.

УЯВ СĔТЕЛĔ

## Пулă

*Кирлĕ пулать: 1 кг пулă (шăмăсăрри), 2 çăмарта, 2 апат кашăкĕ майонез е хăйма, çăнăх, ӳсентăран çăвĕ, авăртнă хура пăрăç, тăвар.*

1. Пулă ашне пысăк мар касăкпа касмалла, тутă кĕмелĕх тăвар, пăрăç сапмалла.

2. Кляр валли çăмарта, майонез, çăнăх хутăштармалла. Вăл çăра пулмалла.

3. Ӳсентăран çăвне ăшăтмалла, пулă касăкне чустана чиксе кăларса икĕ енĕпе саралса хĕреличчен ăшаламалла.

## Кролик – хура сливăпа

*Кирлĕ пулать: 1 кг кролик ашĕ, 1-1,5 стакан хăйма (20-30 процентли), 2 пуç сухан, 3 апат кашăкĕ сĕт, 1 кишĕр, 2 шăл ыхра, 1-3 чей кашăкĕ авăртнă хура пăрăç, 1-2 чей кашăкĕ авăртнă хаяр тымарĕ, 100 г хура слива (вăррисĕр), тăвар, ӳсентăран çăвĕ, 1-2 чей кашăкĕ типĕтнĕ розмарин.*

1. 2 апат кашăкĕ ӳсентăран çăвне, розмарина, хаяр тымарне, авăртнă хура пăрăçа хутăштармалла, вĕтетнĕ ыхра хушмалла.

2. Кроликăн шăмăсăр ашне касăкпа вакламалла, маринада ярса 3 сехет тытмалла. Унтан саралса хĕреличчен ăшаламалла. Тăвар сапмалла, шыв ямалла (вăл аша кăштах хуплатăр), 20 минут пăшăхламалла.

3. Кишĕре теркăпа хырмалла, сухана вĕттĕн турамалла. Хура сливăна 15 минут шывра ислетмелле.

4. Ӳсентăран çăвĕпе сухана, кишĕре ăшаламалла, хура слива хушса темиçе минут çулăм çинче тытмалла, кролик ашĕпе хутăштармалла, хăйма ямалла (малалла ăна сĕтпе лăкамалла).

## «Княжеский» салат

*Кирлĕ пулать: 500 г тĕтĕмленĕ лосось (горбуша), пĕçернĕ 2 çĕрулми, пĕçернĕ 4 çăмарта, пĕçернĕ 1 кишĕр, 1 банка консервланă симĕс пăрçа, кăштах симĕс укроп, çур пуç сухан, 100 г чуста, 2-3 апат кашăкĕ хĕрлĕ вăлча, 2-3 петрушка çулçи, авăртнă хура пăрăç, тăвар, майонез.*

1. Пулла пĕчĕк касăкпа вакламалла. Çĕрулмине, çăмартана, кишĕре пĕçермелле.

2. Çĕрулмине тăваткал турамалла, кишĕре теркăпа хырмалла. Çăмарта шуррипе саррине уйрăммăн вĕтетмелле. Суханпа укропа турамалла.

3. Салата сийпе хумалла: пулă, сухан, укроп, çĕрулми, симĕс пăрçа, çăмарта сарри. Кашни сие пăрăç, тăвар сапмалла, майонез сĕрмелле.

4. Салата çăмарта шуррипе витмелле, айккине кишĕрпе хупламалла. Чустаран чечексем касса кăларса пĕçермелле. Салат çине хумалла, çиеле – вăлча, петрушка çулçи.



## Хĕл Мучи калпакĕ

Çĕнĕ çул салатне Хĕл Мучи калпакĕ пек хатĕрлеме пулать. Ăшне кирек мĕнле çимĕç хумалла (аш, кăлпасси, пулă, пахчаçимĕç...). Çиелтен кăшмана тĕркăпа хырса е помидора вĕтетсе илемлетмелле (хĕрлĕ пусма пек). Хĕррине – çăмарта шуррипе е сырпа.

## Оливье

Оливье валли çĕрулми туранă чухне турамсем пĕр-пĕрин çумне çыпçăнасран çĕççе сивĕ шывпа е ӳсентăран çăвĕпе йĕпетмелле.

## Шăккалатран – ¸лка

Турилккене пĕр сий канфет хумалла, ирĕлтернĕ шăккалатпа сĕрмелле. Çиеле каллех канфет, унтан – ирĕлтернĕ шăккалат. Çапла чăрăш евĕр ăсталамалла. Ăна çиелтен сахăр çăнăхĕ сапса илемлетмелле.

## «Çурта»



Уяв салатне «çуртапа» илемлетмелле: сыра çӳхен касса пăрăх пек çавăрмалла, майонезпа сĕрмелле. Пылак пăрăça çулăм пек касса варрине чикмелле.





## Техĕмлĕ шăршă

Чăрăш, кедр, мандарин çăвĕсене 3-шер тумлам хутăштармалла, сивĕ лампочкăна сĕрмелле. Ăна çутсан пӳлĕмре 3-4 сехете техĕмлĕ шăршă сарăлĕ.

СЫВЛĂХ

# Сиплĕ чăрăш

Чăрăша нумайăшĕ Çĕнĕ çул йывăçĕ тесе кăна шухăшлать. Анчах унра сиплĕ вăй пайтах. Йĕкелĕнче фитонцидсем, сухăр, микроэлементсем (тимĕр, марганец, цинк, кали, пăхăр) пур. Лăссинче С витамин, А провитамин, микроэлемент чылай. Уяв иртсен ăна кăларса пăрахма васкамалла мар. Унăн йĕпписемпе сывлăха çирĕплетме усă кураççĕ. Уявра пулнă йывăç телейпе, савăнăçпа тулнă, çавăнпа вăл сиплĕх вăйĕпе пуян.

**Пыр, карланкă (ангина, ларингит, гайморит) чирĕсенчен** 40 г вĕтетнĕ çамрăк хыр е чăрăш йĕкелĕ илмелле, 200 мл шыва ямалла, вăйсăр çулăм çинче хупă савăтра 30 минут вĕретмелле, сăрăхтармалла. Пыра кунне 5-6 хут чӳхемелле е сăмса шăтăкне 3-4 хут 4-5 тумлам ямалла. Çапла пĕр эрне сипленмелле. Усă куракан шĕвек 35-40 градус ăшă пулмалла.

**Инсульт хыççăн** вăй илме 5 апат кашăкĕ хыр йĕппине пĕр литрлă термоса ямалла, сухан хуппи, 10 шăлан çырлин нимĕрне хушмалла. Тин вĕренĕ шыв ярса (савăт янахĕ таран) 2-3 сехет лартмалла. Кунне 3-4 хут апат хыççăн пĕрер стакан ĕçмелле. Пĕр уйăх сипленмелле.

100 г вĕтетнĕ турат тата 100 г тăвар илмелле, 3 л шыва ямалла, 30 минут вĕретмелле, сăрăхтармалла. Ун хыççăн вĕри шыв тултарнă ваннăна хушмалла. Ваннăра 20 минут выртмалла, унтан типĕнмелле. Ку процедурăна пĕр уйăхра кун сиктерсе пурнăçламалла.

**Бронхитран** 100 г вĕтетнĕ чăрăш йĕппи хатĕрлемелле, тин вĕренĕ çур



литр шыва ямалла, 10 минут вĕретмелле. Кунне 3 хут 2/3 стакан апат хыççăн ĕçмелле. 2-3 уйăх сипленмелле.

Çамрăк хыр йĕкелне 100 г илмелле, çур литр шывра 30 минут вĕретмелле, 1 чей кашăкĕ пыл хушмалла. Кунне 3 хут 2/3 стакан апат хыççăн ĕçмелле. Ӳслĕк иртиччене çапла тумалла.

**Татьяна НОВИКОВА.**



Çĕнĕ çул уявĕ çывхарать. Ăна паллă тунă хыççăн пирĕнтен нумайăшĕ мухмăрпа аптрать: пуç ыратать, апат анмасть, хăсас килет, вăй çук, юн пусăмĕ е чакать, е ӳсет. Ара, ĕçнĕ чух эрех-сăра виçине чухламанран организм наркăмăшланать, пĕвер шар курать.

# Пуç ыратсан

Мухмăра аптекăра сутакан эмелсем сиплеççĕ-ха, анчах халăх меслечĕсемпе те усă курма пулать. Тĕслĕхрен, йӳçĕтнĕ купăста сĕткенĕ, унпа пĕçернĕ яшка, кефир, уйран, томат тата апельсин сĕткенĕсем, пĕтнĕк чейĕ пулăшаççĕ. Ытларах шĕвек ĕçме тăрăшмалла. Çак шутра – минерал шывĕ, шур çырлин морсĕ, шăлан е лимон чейĕ.

Хура çăра чее (сахăрпа), кофĕне асăрханса ĕçмелле. Вĕсем хыççăн хăвăра япăх туйсан пач та усă курмалла мар.

Бархотка чечекĕн шĕвекĕ организма наркăмăшран хăвăрт тасатма пулăшать. 6-8 çеçкене тин вĕренĕ 1 литр шыва ямалла, 3 минут вĕретмелле. Шĕвекĕн пĕр пайне урăх савăта ярса 0,8 литр кăна хăвармалла. Çакăн хыççăн тата 6 минут вĕретмелле. Шĕвеке сăрăхтармалла, сивĕтмелле, кунне 2-3 хут пĕрер стакан ĕçмелле.

Мухмăра сиплесе тăкакланиччен унран хӳтĕленме ансатрах. Организма уява тĕрĕс хатĕрлес тесен:

✓ 2 кун маларах йодпа пуян апат çимелле (тинĕс купăсти, унăн ытти çимĕçĕ, фейхоа);

✓ сĕтел хушшине лармалли кун ирхине ват хăвалакан препаратсемпе усă курмалла ( 2 апат кашăкĕ шăлан сĕткенĕ е аптекăра сутакан 2-мĕш номерлĕ курăк хутăшĕ);

✓ уявччен пĕр талăк малтан 1 таблетка аспирин ĕçмелле.

Сĕтел хушшинче вара шĕвексене хаярлăхĕ пысăкланса пынине кура ĕçмелле. Çырла е шурă эрех хыççăн алла сăра курки тытсан ирхине пуç аптратасса кĕтсе тăр. Апат çимесĕр лармалла мар. Уяв сĕтелĕ çинче пĕçернĕ çĕрулми, тăварланă хăяр е сыр тата лимон пулсан аван.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

# Мĕнпе савăнтарĕ Автан?



❖ Ҫăлтăрсем палăртнă тăрăх – ҫултталăк телейлĕ те ăнăҫлă иртĕ.

❖ Чылайăшĕн ĕҫ укҫи ӳсĕ, теприсем карьера картлашкипе ҫӳлелле хăпарĕҫ. Виҫҫĕмĕшĕсен ытларах шалу тӳлекен вырăна куҫма та май килĕ.

❖ Нумай ҫын сиенлĕ йăларан хăтăлĕ, хăйĕн сывлăхĕ пирки шухăшлĕ.

❖ Хĕрлĕ Автан ҫамрăк мăшăра хӳтĕлет. Ҫавăнпа та ҫирĕп ҫемье ҫавăрма ĕмĕтленекенсем туй туса мăшăрланма васкăр.

❖ Астрологсен шухăшĕпе 2017 ҫул ҫĕнĕлĕхпе пуян пулĕ: асра юлмалли пулăмсемпе палăрĕ вăл.

❖ Автан паллинче ҫуралнисемшĕн ҫултталăк тата та ăнăҫлăрах иртĕ. Ҫавăнпа та вĕсен хăйсен умне лартнă тĕллеве пурнăҫлама май пулĕ.

# Сăнавсем



● Уяв умĕн ҫĕнĕ шăпăр туянма васкăр. Ăна хĕрлĕ хăюпа ҫыхăр, кĕтессе кутăн тăратса хурăр. Ҫапла тусан ҫитес ҫул тулăх пурнăҫпа пурăнăр. Хĕрлĕ хăю вара укҫа-тенке пĕлтерĕ.

● Чăрăша илемлетнĕ май тетте ӳксе ҫĕмĕрĕлчĕ-и? Ан кулянăр, ванчăк мĕн чухлĕ ытларах, тупăш ҫавăн чухлĕ нумайрах пулĕ.

● Ҫĕнĕ ҫул умĕн никама та кивҫен ан парăр. Хăвăр та унпа татăлăр.

● Ҫитес ҫул укҫаллă пулас тесен пысăк купюрăна пĕр-пĕр кĕсьене упрама чиксе хурăр, ăна ҫулталăк ан тытăр.

● Ҫĕнĕ ҫул апатне пăрахма юрамасть – телей каять.

● Ҫĕнĕ ҫула ҫĕнĕ тумпа кĕтсе илсен аван.

● Курантсен сасси янăранă чухне алăра тимĕр укҫа пултăр. Вăл мĕн чухлĕ вакăрах, тупăш ҫавăн чухлĕ нумайрах кĕрĕ.

● Сĕтел тулăх пултăр, сахалтан та 12 тĕрлĕ апат лартăр. Ҫĕнĕ ҫула епле кĕтсе илетĕн, ҫавăн пек ирттеретĕн.

# Ытлă-ҫитлĕ пурăнас тесен...

**1** Автан – пурлăх палли. Лавккаран автан-тетте туянăр та пӳлĕмĕн кăнтăр-хĕвелтухăҫ пайне лартăр.

**2** Хĕрлĕ пир пусмаран хутаҫ ҫĕлĕр. Унта пĕр ывăҫ сарă вак укҫа ярăр, Ҫĕнĕ ҫул умĕн ăна чăрăш айне хурăр. Ирхине хутаҫа вăрттăн вырăна пытарăр. «Укҫа хуратăп, укҫа ыйтатăп, Ҫĕнĕ ҫулта укҫа тупатăп», – тесе калама ан манăр.

**3** Вир пăтти пĕҫерĕр. Черкке сĕкленĕ май кашăкпа пăтă ăсăр, эрех ĕҫнĕ хыҫҫăн ăна хыпăр. «Сывлăхлă та пуян пурăнар!» – тейĕр.

# Пĕлме кăсăк

Уяв умĕн эпир чăрăш илемлететпĕр. Ют ҫĕршывра Ҫĕнĕ ҫул йывăҫĕ мĕн-ши?

■ Раштав уйăхĕн вĕҫĕнче **Ҫĕнĕ Зеландире** похутукава (железное дерево) чечеке ларать. Вăл Раштав палли шутланать.

■ **Китай** урамне «вут-хĕмлĕ йывăҫсем» хитрелетеҫҫĕ. Тĕрлĕ лампочкăпа капăрлатнине кура вĕсене ҫапла ят панă. Китаецсем ҫурчĕсене вара мандарин йывăҫĕпе илемлетеҫҫĕ.

■ **Африкăра** уяв йывăҫĕ – баобаб. Ăна пӳрте илсе кĕме юрамасть. Ҫавăнпа та урамра капăрлатаҫҫĕ.

■ **Суданра** Раштав палли – мăйăр йывăҫĕ. Унăн симĕс ҫимĕҫĕ ҫурта телей илсе килет имĕш.

■ **Никарагуара** кофе йывăҫне кăмăлласҫĕ. Вăл ҫемьене ҫирĕплетет иккен.

■ **Кубăра** Ҫĕнĕ ҫула пальмăпа кĕтсе илеҫҫĕ. Унсăр пуҫне кактуспа пиние (чечек) гирляндăсемпе илемлетеҫҫĕ.

■ **Япони** ҫыннисем ҫурчĕсене лăсăллă йывăҫ турачĕсемпе капăрлатаҫҫĕ.

■ **Мексикăра** Ҫĕнĕ ҫул парнисене пальма айĕнче шыраҫҫĕ.

# Мандаринран



Ҫак ҫимĕҫрен хатĕрленĕ елка хăйнеевĕр илемлĕ. Ăна ăсталама та ансат: пенопластран хатĕрленĕ конус (30 см тăршшĕ), шăл тасаткăчĕ (зубочистка), 2-3 кг мандарин тата чăрăш е хыр турачĕсем кирлĕ.

Шăл тасаткăчне мандарин витĕрмелле те конуса тирмелле. Ҫимĕҫсем хушшине вара чăрăш турачĕсем чикмелле. Хитре, тутлă шăршăллă елкăна сĕтел ҫине лартмалла. Вăл уяв кĕрекине илем кӳретех.

## КУЛĂШ

Икĕ хĕр вăрмана чăрăш касма каяҫҫĕ. Икĕ-виҫĕ сехет йывăҫсене сăнаса ҫӳренĕ хыҫҫăн пĕри теприне:
– Люся, вăрман тăрăх утса йăлăхрăм! Атя, капăрлатманнине те пулин илсе каяр...

***

Упăшкипе арăмĕ юлташĕсене шăнкăравлаҫҫĕ:
– Ҫĕнĕ ҫул ирттерме пирĕн пата килĕр.
– Тавах, анчах пултараймастпăр.
– Эппин питĕ аван.

***

Ҫĕнĕ ҫул умĕн ачасем урамра юр кĕлетке тăваҫҫĕ. Хăйсем йĕп-йĕпе. Пĕр арҫын вĕсене шеллесе:
– Ачасем, сире сивĕ мар-и?
– Пире сивĕ мар, Петя вара шăнса хытрĕ пулас.
– Кам вăл Петя?
– Эпир ăна юр кĕлетке ăшне чиксе хăвартăмăр...

***

– Санта Клаус Хĕл Мучирен мĕнпе уйрăлса тăрать?
– Санта Клаус яланах урă ӳкерчĕкре, ситменнине парнепе. Хĕл Мучи вара – ӳсĕр тата темĕнле хĕрарăмпа.

***

Ача садĕнче Ҫĕнĕ ҫул иртернĕ хыҫҫăн ашшĕ ывăлне:
– Ачам, эсĕ халĕ ҫитĕннĕ, ăнланатăн: чăн пурнăҫра Хĕл Мучи ҫук. Уявра унăн тумтирне эпĕ тăхăннăччĕ.
– Пĕлетĕп. Аист та эсех вĕт.

***

– Айтăр-ха, Ҫĕнĕ ҫула вĕсемсĕр иртерме май ҫук ҫынсене чĕнер.
– Полици! Полици!..


## ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ



**Эпĕ Саша ятлă, 50 ҫулта. Ялта пĕчченех пурăнатăп, сăра-эрех ĕҫместĕп. Ҫурта газпа ăшăтатăп. Выльăх-чĕрлĕх тытатăп. Хушма хуҫалăхри ĕҫсене тракторпа пурнăҫлатăп.**

**Ялта пурăнма килĕшекен, сăра-эрехпе иртĕхмен хĕрарăмпа паллашасшăн.**

**Ҫак номерпе шăнкăравлама пултаратăр: 8-961-344-14-38.**


# Ҫĕнĕ ҫула кĕтсе

**Салют шавĕпе.** Ҫĕнĕ ҫула шавлă та хаваслă кĕтсе илме сĕнеҫҫĕ. Ҫывхарса килекен Автан ахальли мар, Ҫулăмли! Ҫавăнпа шартлак, фейерверк, конфетти ытларах хатĕрлемелле. Сĕтел ҫине ҫичĕ шурă ҫурта лартмалла. Ҫурт-йĕре, хваттере, елкăна тĕрлĕ тĕслĕ лампочкăсемпе илемлетмелле.

**Парне.** Автан – «кил хуҫи», хăйĕн килĕнче йĕрке тăвать. Ҫавăнпа ҫемье валли пĕр парне туянсан та ҫителĕклĕ: юсав хатĕрĕ, йăла техники тата ытти те. Хĕрарăмсемпе арҫынсем валли – косметика, парфюмери. Ачасене – ăс-тăна аталантармалли усăллă япаласем (конструктор).

**Хĕрлĕ, сарă.** Елкăна хĕрлĕ, ылтăн, сарă тĕслĕ шарпа, гирляндăпа илемлетмелле. Ун айне кăкшăмпа пучах лартмалла. Сĕтел ҫинче те ҫак тĕссем ытларах пулмалла. Варринче мандарин, ытти сарă тĕслĕ улма-ҫырла, вир кĕрпи. Автан ялта пурăнать. Ҫавăнпа чӳрече анине хутран, пластмассăран тунă чечексемпе, стенана суханпа пăрăҫ ҫыххин муляжĕпе капăрлатмалла.

**Ҫемьепе.** Астрологсем Ҫĕнĕ ҫула килте, ҫемьепе кĕтсе илме сĕнеҫҫĕ. Унччен хирĕҫ-тăрăва татса памалла, кӳренĕве манса пĕр-пĕрне каҫармалла. Ҫывăх ҫынсенче, тăвансемпе ҫур сĕрччен ҫураҫмалла. Сĕтел хушшинче хирĕҫсерен асăрханмалла. Астрологсем уява шавлă, хаваслă иртерме сĕнеҫҫĕ. Ҫĕнĕ ҫула кĕтсе илме тĕплĕ хатĕрленмелле. Уява хаваслă иртерме ҫывăх юлташсене те чĕнме юрать.

**Тумтир.** Автан ҫулталăкне ҫутă та илемлĕ тумпа кĕтсе илмелле. Ун ҫинче хĕрлĕ, сарă-хĕрлĕ, сарă тĕссем пулсан лайăхрах. Ҫулăма аса илтерекен, ылтăн, кĕмĕл тĕслисем хĕрарăмсене кăна мар, арҫынсене те ăнăҫу кӳрет. Кĕмĕл, ылтăн эрешсем ҫакни автан кăмăлне кайĕ.





# Уяв кĕреки

❖ Уяв сĕтелĕ ҫине чăх-чĕпрен хатĕрленĕ апат, чăмăрла ҫăмарта лартмалла мар. Вăл ешĕл ҫимĕҫпе, улма-ҫырлапа, пулăпа, чĕрĕ тата консервланă пахчаҫимĕҫпе пуян пулмалла. Вĕсемпе салатра, гарнирта, тĕп блюдо хатĕрленĕ ҫĕрте усă курмалла.

❖ Выльăх-чĕрлĕх какайне пысăк мар касăкпа касмалла. Фольгăна чĕркесен е чукун савăтра вăл аван пиҫет, тутине лайăхлатма техĕмлĕ курăкпа усă курмалла.

❖ Ҫăмăл десерт валли улма-ҫырларан желе, мусс хатĕрлеме юрать.

❖ Ытлашши хаяр мар эрех-сăра (хĕрлĕ эрех, шампань эрехĕ, вермут, ликер, коктейль) суйласа илмелле.

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Раштав, 29 – кĕҫнерникун | Раштав, 30 – эрнекун | Раштав, 31 – шăматкун | Кăрлач, 1 – вырсарникун | Кăрлач, 2 – тунтикун | Кăрлач, 3 – ытларикун | Кăрлач, 4 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 8.23 | 8.23 | 8.22 | 8.22 | 8.22 | 8.22 | 8.21 |
| | анать | 15.22 | 15.23 | 15.25 | 15.27 | 15.28 | 15.29 | 15.31 |
| Кун тăршшĕ | | 6.59 | 7.00 | 7.03 | 7.05 | 7.06 | 7.07 | 7.10 |
| УЙĂХ | тăхри | ҫĕнĕ уйăх (9.52) | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 1-мĕш кун | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Ту качаки паллинче | Ту качаки паллинче | Шывтăкан паллинче | Шывтăкан паллинче | Шывтăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче |

# Культура центрĕн алăкĕ уçăлать

**Елчĕк районĕнчи Тӳскел ял халăхĕ кану центрĕ уçăласса тахçантанпах чăтăмсăррăн кĕтетчĕ. Ара, кивĕ клуб çурчĕ юхăннине кура 2009 çултах хупăннă. Йышпа пуçтарăнма, канма вырăн çукран тепĕр çĕрте алă уснă пулĕччĕç. Тӳскелсем чăннипех те маттур, хастар çав. Ялти "Шуçăм" ансамбль культура вучахне сӳнме паман. Уявсенче урамра юрласа-ташласа халăха савăнтарнă, репетицисене ял хуçалăх предприятийĕн пĕчĕк çеç бригада çуртне пуçтарăннă. Вĕсен пуçарулăхне, ытти çынсен тăрăшулăхне кура паян Тӳскелсем нумай функциллĕ кану центрĕ уçăлнине паллă тăваççĕ. Савăнăçлă мероприятие Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнать.**


*«Шуçăм» ансамбль*

"Шуçăм" ансамбле çӳрекен Зинаида Чернова палăртнă тăрăх – çак саманта вĕсем чӳк уйăхĕнчен пуçласах хатĕрленме тытăннă. "Çунат хушассăм килет" юррăн хăш-пĕр йĕркине уявпа килĕшсе тăмалла çĕнетнĕ.

Хăй вăхăтĕнче "Шуçăм" эстрада ансамблĕ кĕрлесе тăнă. Кайран ăна ялти аслă çулти çынсем иккĕмĕш пурнăç парнеленĕ. Вениамин Игнатьев ертсе пыракан ушкăн йĕркеленнĕренпе кăçал 4 çул çитнĕ. Тӳскелсем çинчен тĕнчене çавăрса илнĕ интернетра йăлт пĕлме пулать. Ялта культура мероприятийĕ иртет-и, пĕрлехи йышпа пархатарлă ĕç тăваççĕ-и е ытти пулăм савăнтарать – Сергей Нягин фото е видеоальбом тăвать те интернета вырнаçтарать.

Юрласа ташланисĕр пуçне ансамбле çӳрекенсен – кашнин хăйĕн тивĕçĕ. Кунта укça шутлакан, сцена тумне пăхса тăракан, видеооператор, завхоз тата ытти те пур. Зинаида Чернова, тĕслĕхрен, уявсен сценарине çырса хатĕрлет.

"Шуçăм" ушкăна çӳрекенсем туслă, уяв сĕтелне хăйсем пĕçернĕ апат-çимĕçпе пуянлатаççĕ, ал ĕç ăсталăхне пĕрпĕринчен вĕренеççĕ, Елчĕке бассейна шыва кĕме, ытти мероприятие те пĕрле хутшăнаççĕ. Акă çурла-авăн уйăхĕсенче вырăнти депутат Дмитрий Судаков пуçарăвĕпе яла кĕнĕ вырăнта стела вырнаçтарнă. 60-70 çулсенчи хĕрарăмсем те пулăшма тухнă.

Халĕ ĕнтĕ ял хуçалăх предприятийĕн бригада çурчĕн стени çинче трактористсен запас пайĕсемпе юнашар çакăнса тăнă музыка инструменчĕсем хăтлă та ăшă çуртра вырăн тупĕç. Вĕсемпе ансамбле çӳрекенсене спонсорсем тивĕçтернĕ.

"Пытармасăр каласан экономика енчен çак йывăр тапхăрта çĕнĕ культура çурчĕ туса парасса эпир шанман та. Строительство ĕçне кĕске вăхăтра вĕçлерĕç. Тăрăшнине кура пулăшаççех иккен", – хавхаланса каласа кăтартаççĕ хĕрарăмсем.

Палăртмалла, Тӳскелти 120 вырăнлă нумай функциллĕ культура центрне ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ялта культурăпа кану учрежденийĕсене аталантарас тĕлĕшпе йышăннă Указа пурнăçласа хута янă. Унăн никĕсне хывнă чух Тӳскелсем ĕлĕкхи чăвашсен йăлипе Турă кĕтессине кĕмĕл укçапа çăм хунă. Кĕмĕл – пӳрт-çурта тулăх, çăм – хăтлăхпа ăшă кӳрет.

**Ирина ПАВЛОВА.**

# Тăлăхсемшĕн чун хĕпĕртет


*Зоя Филиппова, Элĕк район администрацийĕн заместителĕ Лидия Никитина, Ирина Ильина.*

– Çулталăк вĕçленсе пынă май асра юлнă самантсене тепĕр хут тишкерсе пĕтĕмлететпĕр. Çитменлĕхсене палăртса ырă пулăмсемшĕн савăнатпăр. Уяв çывхарнипе-ши ытларах лайăххи куç умне тухать.

Кăçал маншăн кăна мар, ыттисемшĕн те асра юлнă самантсем самай пулчĕç. Акă кĕр мăнтăрĕпе Элĕкри Ольга Гавриловăпа Татьяна Ильдеркина тăлăхсем çĕнĕ хваттерсене пурăнма куçрĕç. Хăтлăскерсене йăлтах бюджет шучĕпе туса панă. Ку вĕсемшĕн курăмлă пулăшу. Пурăнмалли кĕтесе район центрĕнче уйăрнă май вĕсене ĕç тупса вырнаçма та çăмăлрах пулĕ. Юлашки икĕ çулта 7 тăлăха хваттерпе тивĕçтернĕ. Çапах черетре тата 37-ĕн тăраççĕ. Вĕсем те çурт-йĕрсĕр юлмĕç, – терĕ Элĕк район администрацийĕн опека тата попечитель органĕн тĕп специалисчĕ Ирина Ильина. – Тепĕр паллă самант: нумаях пулмасть пирĕн тăрăхри нумай ачаллă амăшне, Зоя Филипповăна Чăваш Ен Пуçлăхĕн Тав хутне парса хавхалантарчĕç. Çемьен 9 ача, çав шутра хăйсен 2. Вĕсенчен тăваттăшĕ шкул пĕтернĕ, пурнăç çулĕ çине тăнă. Аслă шкулта пĕлĕве малалла тăсакансем те пур. Зоя Степановна 25 çул фельдшерта вăй хунă. Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн вăхăтне ачисемпе иртterме тăрăшать. Йышлă та туслă çемьешĕн чун савăнать. Кăçал республикăри 16 тăлăх ача Элĕк районĕнче çемьесем тупрĕç. Ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнăскерсене Шупашкарти реабилитаци центрĕнчен илсе килнĕ. Çав хушăрах районта тепĕр 4 ачана тупса палăртрăмăр. Вĕсене те çемьесене вырнаçтарнă. Тăлăхсем Çĕнĕ çула çемьере кĕтсе илнишĕн мĕнле хĕпĕртемĕн?

Хам та уява яланах килте çывăх çынсемпе иртterме тăрăшатăп. Кăçал та çаплах пулĕ. Курантсем çапнă хыççăн кӳршĕсене арша саламлама каятпăр.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Голландире хăнара

**Елчĕк районĕнчи Çирĕклĕ Шăхальте пурăнакан Васильевсемшĕн Упăте çулĕ уйрăммăн асра юлнă. Галина Ивановнăпа Виктор Порфирьевич Голландие мăнукне курмашкăн кайса килнĕ. Хĕрĕ Светлана Верверсхоф поселокĕнче 8 çул пурăнать. Ялти шкулта вĕреннĕ чухнех акăлчан чĕлхипе кăсăкланнă хĕр. Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче пĕлӳ илнĕ май хăйĕн ăсталăхне татах та çирĕплетнĕ. Каярахпа интернет урлă Голланди каччипе, Фридус Ланпа, паллашнă. Пĕрре курсах савнă вăл чăваш хĕрне. Çапла майпа Светлана ют çĕршывра пурăнма тытăннă.**


*Васильевсем*

Мĕн килĕшнĕ-ха унта Васильевсене? Халăх кăмăллă пулни тĕлĕнтернĕ. «Пĕр палламан çынсем пире сывлăх сунни савăнтарчĕ», – тет кил хуçи хĕрарăмĕ. Сăра-эрехпе, пируспа иртĕхменни, урамсене тирпейлĕ тытни тĕлĕнтернĕ. Пур çĕрте те чечек, йывăç-тĕм иккен. Çулсене брусчаткăпа сараççĕ, тип-тикĕс. Ниçта та пылчăк курăнмасть. Çĕнĕ районта çуртсем çĕкленнĕ май тӳрех çул тума тытăнаççĕ. Патшалăх халăхшăн тăрăшни куçкĕретех.

Фермерсенчен хăшĕ-пĕри сад ĕрчетет, тепри ĕне усрать, виççĕмĕшĕ сысна тытать. Хăйсем çитĕнтернĕ çимĕçе сутас тĕлĕшпе те май тупнă вĕсем. Сăмахран, пахчаçимĕçе çурт умне тухса лартаççĕ, укçа хумалли савăт та юнашарах. Тавар туянакан ăна кирлĕ чухлĕ илет те нухрата хурса хăварать. Утă тĕркемĕсене пленкăпа чĕркени те çынсем тирпейлĕ пулнине палăртать.

Ваттисен çурчĕсем, реабилитаци центрĕсем пысăк çуртсенче вырнаçнă. Çывăх тăванĕсене ватлăхра кам пăхаймасть – унта усраççĕ. Вĕсене лайăх пăхаççĕ иккен. Масар вара пысăках мар. Çĕре перекетлеççĕ пулас унта. Çавăнпах пĕр шăтăка 4-5 çынна пытараççĕ, айлă-çийлĕ. Пĕр палăк çине 4-5 çын хушамачĕ çырăнать.

Паллах, çын укçине шутлама аван мар, çапах та пенси укçипе те кăсăкланнă Галина Ивановна. Сăмахран, унăн тăхлачи 1 пин евро (пирĕннипе 70 пин) илет. Вăл 73 çулта пулин те ташă кружокне çӳрет. Кунта хĕрарăмсем те, арçынсем те 65 çулта тивĕçлĕ канăва тухаççĕ.

Светлана вăрлăх лабораторийĕнче ертӳçĕре тăрăшать. Вĕсем çĕнĕ сортсем кăлараççĕ. Мăшăрĕ – тракторист, тюльпан лартнă çĕрте вăй хурать. Пĕчĕк Арон – яслинче, 4 уйăх тултаричченех унта. Вĕсен çемйи виçĕ хутлă çуртра пурăнать. Паллах, тăкаксем те çук мар. Сăмахран, çулшăн уйăхсерен укçа пухаççĕ, машинăна кашни уйăхрах страхламалла, тупăш налукне 38 процент тытса юлаççĕ, çуртшăн 1 пин евро (уйăхра) кредит тӳлет çемье.

Васильевсене Голланди питĕ килĕшнĕ. Малашне те кайма ĕмĕт пур. Лешсем те çыхăнăва татмаççĕ. Чăваш Ене ик-виçĕ хутчен те килсе кайнă. Кунти хĕрарăмсем лаша пек ĕçлени тĕлĕнтернĕ Фридуса. Вĕсене питĕ хĕрхеннĕ вăл.

**Валентина ПЕТРОВА.**

## АСĂРХАНĂР!

# Уяв савăнăç çеç кӳтĕр

**Çĕнĕ çулпа Раштав ачасемшĕн те, аслисемшĕн те пысăк уяв. Вĕсем хаваслă та савăнăçлă иртчĕр тесен хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнмалла. Унсăрăн уявсем инкекпе вĕçленме пултарассĕ.**

– Фейерверк-салютпа усă курнă чухне инструкцие çирĕп пăхăнмалла, пиротехника изделине лайăх сăнамалла: йĕпеннĕ ырăнсем, лапчăк тĕркемсем пуррипе çуккине пăхмалла.

– Сутуçăн тавар пахалăхĕн сертификатне, ытти документацие кăтартмалла. Кашни изделин унпа мĕнле усă курмалли пирки инструкци пулмалла.

– Пиротехникăна нӳрĕк тата хĕвел çути лекмен вырăнта тытмалла, унсăрăн вăл юрăхсăра тухать.

– Нӳрлĕскере хутса ăшăтмалли хатĕрсем, батарейсем çинче типĕтме юрамасть.

– Пиротехника продукцине усă куриччен те, ун хыççăн та салатмалла мар.

– Ăна хваттерте, офисра, çуртра сирпĕтме юрамасть.

– Çил вăйлă чухне фейерверк тума кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен илем те çухалать, хăрушă та. Хĕлхеме çил вĕçтерсе каять.

– Фейерверк изделийĕсене ямашкăн ятарлă вырăнпа усă курмалла. Чăваш Республикинче çавăн пек 72 вырăн уçма йышăннă. Унта çӳп-çап е пĕр-пĕр техника, çын, электропралук ан пултăр.

– Салюта урамри çуртсенчен 50 метр аяккарах вырăнта ямалла.

– Пиротехникăпа усă курнă хыççăн 15-20 минут ун патне пыма юрамасть.

– Пиротехника изделийĕн усă курас вăхăчĕ тухнă пулсан ăна алла ан тытăр.

– 18 çула çитмен ачасене пиротехника сутма юрамасть.

– Унпа урă чухне çеç усă курăр!

– Петардăна çынсенчен, чĕрчунсенчен, аслă çулран, çуртсенчен, çăмăл ирĕлекен япаларан 5 метр аяккарах вырăнта ямалла.

– Ракетăна та чӳречерен, балконран яма юрамасть. Унсăрăн вут-хĕм тавраш балкон çине ӳкме е хваттере кĕме, çавна май пушар тухма пултарать. Ăна вертикаль майпа вырнаçтармалла, ун умне пĕшкĕнмелле мар.

Инструкцие пăхăнсан çеç илемлĕ фейерверкпа савăнма пулать.

## ÇУХАТУ

# Чĕререн хурланатпăр

**Раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнче Хура тинĕсре РФ Оборона министерствин ТУ-154 самолечĕ ӳкнĕ. Хăрушă инкекре 92 пассажир пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă.**

А. В. Александров ячĕллĕ юрăпа ташă ансамблĕн артисчĕсем, çар çыннисем, журналистсем Сирие Раççей салтакĕсене Çĕнĕ çулпа саламламашкăн кайма тухнă. Вĕсен йышĕнче пирĕн ентешсем – çамрăк лейтенант, режиссер тата юрăç Максим Ивановна Шупашкарти И. Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ, пĕрремĕш курсра вĕренекен Андрей Кочемасов та пулнă. Вĕсем иккĕшĕ те А. В. Александров ячĕллĕ ансамбльте ĕçленĕ.

Максим Иванов – чăваш каччи, Пушкăртстанри Ĕпхӳ хулинче çуралса ӳснĕ. Мускаври ГИТИСран вĕренсе тухнă. Пултаруллă çамрăк Морис Равелĕн «Дитя и волшебство» спектаклне Шупашкар сцени çине кăларнă. Çак проект РФ Культура министерстви йĕркеленĕ çамрăк режиссерсене пулăшассишĕн ирттернĕ конкурсра ăна çĕнтерме пулăшнă. Андрей Кочемасов вара Чăваш Ене Ленинград облаçĕнчен килнĕ, аслă шкула вĕренме кĕнĕ. Кусăмсăр майпа пĕлӳ илекенскерĕн часах пĕрремĕш сессийĕ пуçланмаллаччĕ.

Малтанлăха палăртнă тăрăх – лайнер Адлертан вĕçсе тухнă хыççăн Сирие çул тытнă, анчах вырăна çитеймен. Самолет ванчăкĕсене Хура тинĕсре тупнă. Хăрушă инкекре пĕр çын та çăлăнайман.

Шупашкарта Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ умĕнче çамрăк юрăçсене асăнса митинг иртнĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев авиакатастрофăра вилнисен çемйисемпе, тăванĕсемпе пĕрле хурланнине палăртнă. «Пысăк çухату пурне те пăшăрхантарать. Вăл кашнин чĕрине хурлантарать. Самолетра пирĕн ентешсем те пулнă. Чăваш Ен халăхĕ ячĕпе чунран хурланнине пĕлтеретĕп», – тенĕ вăл.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

## 2016 – КИНО ÇУЛТАЛĂКĔ

# Киномеханикра 30 çула яхăн



"Иртсе пыракан çулталăкра Раççейре кино искусствине çӳллĕ шая çĕклесе чысланăшăн савăнтăм. Пĕр вăхăтра унăн "вучахĕ" сӳнме пуçларĕ, çакă чуна хурлантарчĕ. Анчах кăçал хамăр республикăри сахал мар кинотеатра иккĕмĕш пурнăç парнелеме патшалăх май тупни ырă шанăç вăратать.

Кино халăхшăн яланах пĕлтерĕшлĕ пулнă. "Ĕнене кайран та суса ĕлкĕрĕпĕр-ха. Яла çĕнĕ фильм илсе килнĕ. Ăна курма васкамалла тесе клуба чупатчĕ хĕрарăмсем", – аса илет Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре пурăнакан Валерий Егорович Савуков.

Вăл 30 çула яхăн киномеханикра тăрăшнă. Ялтан яла çӳресе миçе пин çухрăм тăршшĕ кинолента тухман-ши унăн аппаратури витĕр? Çак ĕçпе ветеран шкулта йĕркеленĕ кружока çӳренĕ май туслашнă. Пултарулăхĕшĕн, тăрăшулăхĕшĕн ăна чылай наградăпа хавхалантарнă. Тĕслĕхрен, Валерий Егорович – СССР кинематографин отличникĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Вăл ĕлĕкхи кинокартинăсене ытларах кăмăлланине пытармасть. "Вĕсенче чунлăх пысăк вырăн йышăнать. Чăн пурнăça сăнлани те халăха çывăх. Тепĕр чух халĕ те вĕсене кусçуль витĕр пăхатăп", – тет ĕмĕрне киномеханик ĕçĕпе çыхăнтарнă ватă.

**Ирина АНДРЕЕВА.**

## САЛАМЛАТПĂР!



Хаклăран та хаклă, юратнă çыннăмăра – Патăрьел районĕнчи Çĕньялта пурăнакан **Зинаида Николаевна КИРИЛЛОВĂНА** – 80 çулхи юбилейпе чĕрери чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Иртсе кайнă кунсен аса илĕвĕ санăн пурнăçна çăмăллатса пытăр. Ачусемпе мăнукусен юратăвĕпе киленсе нумай çул пурăнмалла пултăр.

Усă кăмăл, тараватлăх,
Чун ăшши те пултарулăх,
Ĕмĕр тăршшĕ упрамалăх
Ырă турă патăр сывлăх.



**Мăшăрĕ, 3 ывăлĕ, 2 хĕрĕ, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, шăллĕсем, тăхлачисем.**



# РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

## СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20x20x40 – 32 руб., 12x20x40 – 26 руб., 9x20x40 – 22 руб. Песок, ОПГС, щебень, кирпич, **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**11. Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**16. Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, уголь – недорого. Т. 89053465671.

**21. Керамблок, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 89176757528.

**27. КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ керамзитобетонные.** Доставка. Манипулятор. Т. 89033220208.

**62. Блоки КБ** от 33 руб., **цемент,** доски обрезные от 5600 руб., песок, ОПГС, **кирпич.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 89033222532.

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20x20x40, 20x12x40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**98. Бетон,** раствор, фунд. **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, **крышки** для погреба, доски. Д-ка. Дешево. Т. 89278535732.

**610. Отруби** – 7 р., **пшеницу** – 9,5 р., **ячмень** – 9 р. Т. 89373916016.

## ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**39. Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50. Коров, телок.** Т. 8-927-850-85-64.

**612. Закупаем поросят** 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05.

**816. Бычков, коров, телок, лошадей.** Дорого. Т. 8-961-344-03-82.

**817. Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.

**818. Бычков, телок, коров, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.

**820. Лосиные рога.** Т. 89022881900.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на **3, 6, 7** этажах
Дома печати.
Справки по тел.: 28-83-70, 56-04-17, 28-83-64.

## ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 9.00 до 19 ч., сб., воскр. с 9.00 до 13 ч. А: г. Чебоксары. **Т. 8(8352)55-27-33.** *Лиц. ЛО 21-01-001 341 от 17.11.2015г. МЗ ЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**38. Чистка колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.

**45. Лечение алкоголизма и табакокурения.** Т.: 8(8352)215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**53. Изготовление ЛЕСТНИЦ** (дуб, хвоя, береза). **Т. 8-917-662-34-94.**

**77. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152. Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**189. Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.

**812. Фото, видеосъемка.** Т. 8-917-676-35-24, Александр.



**«ХРЕСЧЕН САССИ»**
**Обществăпа политика хаçачĕ**
**Индекс 54838**
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

**ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Д. А. МОИСЕЕВ**

**Редактор – В.В. ПЕТРОВА**
**РЕДКОЛЛЕГИ:**
**В.В. Петрова – редактор**
**И.П. Никитина – корреспондент**
**Л.А. Никитина – корреспондент**
**Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ**

hypar3@mail.ru

**Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.**
**Телефонсем:**
**директор-тĕп редактор – 56-00-67,**
**пайсем – 62-50-06, 62-04-54,**
**реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.**
**Факс (8352) 62-50-06**

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

**Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.**
**Заказ 4611**
**Тираж 6649**

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.

## ТУНТИКУН, 2

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «ДНЕВНИКИ ПРИНЦЕССЫ: КАК СТАТЬ КОРОЛЕВОЙ»
8.25 «Ледниковый период 4: Континентальный дрейф»
10.10 Х/ф «ОДИН ДОМА»
12.10 Х/ф «ОДИН ДОМА 2»
14.20 «Ээхх, Разгуляй!» 12+
18.10 «Угадай мелодию» 12+
18.50 Х/ф «ИРОНИЯ СУДЬБЫ» 12+
21.00 «Время»
21.20 «МаксимМаксим» Новогодний выпуск 16+
23.10 «Что? Где? Когда?» Финал года
1.10 Х/ф «ПЕРЕВОЗЧИК» 16+
2.55 Х/ф «НИАГАРА» 16+
4.30 «Модный приговор»
5.20 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.15 Х/ф «ВАРЕНЬКА» 12+
7.15 Х/ф «ВАРЕНЬКА. ИСПЫТАНИЕ ЛЮБВИ» 12+
11.00, 20.00 Вести
11.40, 20.40 Вести. Местное время
11.55 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ» 12+
13.50 «Песня года»
16.20 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
20.55 Т/с «ЦВЕТОК ПАПОРОТНИКА» 12+
0.45 Т/с «КУКУШЕЧКА» 12+
2.15 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»
3.40 «Городок. Лучшее»

### ЧТВ

11.40-11.55 Вести-Чувашия

### НТВ

5.20 «Еда живая и мертвая» 12+
6.05 Х/ф «В ЗОНЕ ДОСТУПА ЛЮБВИ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.15 Т/с «СТРОЙКА» 16+
13.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
15.15 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
19.20 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 «ДВА ПО ПЯТЬДЕСЯТ» Юбилейный концерт Алексея Кортнева и Камиля Ларина 12+
1.20 Х/ф «АЛМАЗ В ШОКОЛАДЕ» 12+
2.55 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.55 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### НТРК

6.00 Х/ф "ВОКЗАЛ ДЛЯ ДВОИХ" 12+
9.00 Х/ф "ПОГОВОРИ СО МНОЙ О ЛЮБВИ" 16+
11.00 "ПĔЧЧЕННИСЕНЕ ОБЩЕЖИТИ ПАРАÇĔ". Чăвашла куçарнă фильм 12+
13.00 "Детский новогодний концерт" 0+
14.00 "Çерем çинчи çиçĕм". Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн спектаклĕ 6+
16.00 "Стеклянный дом" 12+
16.30 "Кулăш кустăрми çĕнĕлле!" 16+
19.30 "Çĕнĕ çул юмахĕ". "Тăван радио" çуралнă кунĕнче 12+
22.00 Х/ф "УКРОЩЕНИЕ СТРОПТИВЫХ" 16+

### Наци радиовĕ

7.20-8.00 Мĕншĕнкке (6+)
6.00-7.00, 9.10-9.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăхăри (12+)
8.20-9.00 Ялтан яла (12+)
10.00-11.00 Радиотеатр (6+)
12.00-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
16.20-17.00 Шурăмпуç (12+)
18.20-19.00 Çемье ăшши
19.20-20.00 Чунра юрă шăрансан (12+)

## ЫТЛАРИКУН, 3

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «БЕДНАЯ САША»
8.15 «Ледниковый период 3: Эра динозавров»
10.15 Х/ф «ПИРАТЫ КАРИБСКОГО МОРЯ: ПРОКЛЯТИЕ «ЧЕРНОЙ ЖЕМЧУЖИНЫ» 12+
12.20 «Пираты Карибского моря: Проклятие «Черной жемчужины» 12+
13.15 «Пираты Карибского моря: Сундук мертвеца» 12+
16.00 «Одна за всех» с Анной Ардовой 12+
17.00 «Подмосковные вечера»
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.20 Х/ф «АВАТАР» 16+
0.15 Х/ф «ПЕРЕВОЗЧИК 2» 16+
1.50 Х/ф «ОСВЕДОМИТЕЛЬ» 16+
3.55 «Модный приговор»
4.55 «Наедине со всеми» 16+

### РОССИЯ 1

5.15 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
6.40 М/ф «Маша и Медведь»
7.15 Х/ф «ВАРЕНЬКА. НАПЕРЕКОР СУДЬБЕ» 12+
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.40, 20.40 Вести. Местное время
11.55 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ» 12+
14.20 «Юмор года» 16+
16.20 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
20.55 Т/с «ЦВЕТОК ПАПОРОТНИКА» 12+
0.45 Т/с «КУКУШЕЧКА» 12+
2.20 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»
3.40 «Городок. Лучшее»

### ЧТВ

11.40-11.55 Вести-Чувашия

### НТВ

5.30 «Жизнь как песня: Татьяна Буланова» 16+
6.05 Х/ф «ЗА СПИЧКАМИ»
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.15 Т/с «СТРОЙКА» 16+
13.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
15.15 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
19.20 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 Концерт Юмор FM «Все хиты Юмора» 12+
1.00 «ПОЭТ ПЕТРУШКА» Итоговый журнал 18+
1.40 Х/ф «КУРЬЕР» 0+
3.05 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
4.05 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### НТРК

6.00 Х/ф "ОБЫКНОВЕННОЕ ЧУДО" 12+
9.00 Х/ф "ПОГОВОРИ СО МНОЙ О ЛЮБВИ" 16+
11.00 "СИРЕ ТĔЛЛЕНМЕН ТЕ". Чăвашла куçарнă фильм 12+
13.00 "Праски кинеми мăнукне авлантарать". Камит-мюзикл 12+
15.30 "Казачья застава" 12+
16.30 "Хырăм тытса кулар-ха". Виктор Петров 16+
19.30 "Новогоднее волшебство". Концерт Раисы Казаковой-Сэйт"
22.00 Х/ф "ЗВЕЗДА" 16+

### Наци радиовĕ

6.00-7.00, 9.10-9.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăхăри (12+)
9.00-11.00 Радиотеатр (12+)
11.20-12.00 Ачалăх урхамахĕ
12.00-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
16.20-17.00 Преодоление
18.20-19.00 Мăшăр çунат
19.20-20.00 Çĕнĕ çулăн асамлă çутисем (12+)

## ЮНКУН, 4

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «ТРЕМБИТА»
8.20 «Ледниковый период 2: Глобальное потепление»
10.10 Х/ф «ПИРАТЫ КАРИБСКОГО МОРЯ: НА КРАЮ СВЕТА» 12+
12.10 «Пираты Карибского моря: На краю Света» 12+
13.30 «Пираты Карибского моря: На странных берегах» 12+
16.00 «Одна за всех» с Анной Ардовой 12+
17.00 «Подмосковные вечера» 16+
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.20 Х/ф «СТРАНА ЧУДЕС»
22.50 «В поисках Дон Кихота»
0.45 Х/ф «ДЬЯВОЛ НОСИТ PRADA» 16+
2.50 Х/ф «ПОСЛЕДНИЙ АМЕРИКАНСКИЙ ГЕРОЙ» 16+
4.35 «Модный приговор»
5.25 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.20 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
6.45 М/ф «Маша и Медведь»
7.20 Х/ф «ВАРЕНЬКА. И В ГОРЕ, И В РАДОСТИ» 12+
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.40, 20.40 Вести. Местное время
11.55 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ» 12+
14.20 «Новая волна» Лучшее
16.20 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
20.55 Т/с «ЦВЕТОК ПАПОРОТНИКА» 12+
0.45 Т/с «КУКУШЕЧКА» 12+
2.20 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»
3.30 «Городок. Лучшее»

### ЧТВ

11.40-11.55 Вести-Чувашия

### НТВ

5.35 «Жизнь как песня: Стас Пьеха» 16+
6.10 Х/ф «ЗИМНИЙ ВЕЧЕР В ГАГРАХ» 0+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.15 Т/с «СТРОЙКА» 16+
13.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
15.15 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
19.20 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 «Юбилейный концерт Николая Носкова «6.0» 12+
1.10 Х/ф «ЛЮБИ МЕНЯ» 12+
2.50 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.50 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### НТРК

6.00 Х/ф "ЖЕСТОКИЙ РОМАНС" 12+
9.00 Х/ф "ТЕМНЫЕ ВОДЫ" 16+
11.00 "ЯЛТА ПУЛСА ИРТНĔ ĔÇ". Чăвашла куçарнă фильм
13.00 "Хурлăхлă хурама сасси". Икĕ пайла драма 12+
16.00 "О, кăна кĕрсе курмалла". Виктор Петров 12+
19.00 "Акатуй 2016" 12+
22.00 Х/ф "НУЛЕВОЙ КИЛОМЕТР" 16+

### Наци радиовĕ

12.00, 13.00, 16.00, 19.00 - Хыпарсем (Новости) (12+)
6.00-7.00, 9.10-9.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-22.00, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăхăри (12+)
8.20-10.00 Çĕнĕ çулăн асамлă çутисем (12+)
10.20-11.00 Чунра юрă шăрансан (12+)
12.10-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
16.20-17.00 Сердце, отданное детям (12+)
18.20-19.00 Ялтан яла (12+)

## КĔÇНЕРНИКУН, 5

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «ОПЕРАЦИЯ «С НОВЫМ ГОДОМ!» 16+
8.30 «Ледниковый период»
10.10 М/ф «Холодное сердце»
12.10 Х/ф «ЗОЛУШКА»
14.15 Х/ф «СНЕЖНЫЙ АНГЕЛ» 12+
16.10 «Одна за всех» с Анной Ардовой 12+
17.10 «Подмосковные вечера» 16+
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.20 Х/ф «МЛЕЧНЫЙ ПУТЬ» 12+
23.00 «В поисках Дон Кихота» 16+
0.00 Х/ф «ПОДАЛЬШЕ ОТ ТЕБЯ» 16+
2.25 Х/ф «ОМБРЕ» 12+
4.30 «Модный приговор»
5.25 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.00 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
6.45 М/ф «Маша и Медведь»
7.20 Х/ф «ВАРЕНЬКА. И В ГОРЕ, И В РАДОСТИ» 12+
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.40, 20.40 Вести. Местное время
11.55 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ» 12+
14.20 Юбилейный вечер Олега Газманова
16.20 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
20.55 Т/с «ЦВЕТОК ПАПОРОТНИКА» 12+
0.45 Т/с «КУКУШЕЧКА» 12+
2.20 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»
3.45 «Городок. Лучшее»

### ЧТВ

11.40-11.55 Вести-Чувашия

### НТВ

5.25 «Жизнь как песня: «ТАТУ» 16+
6.10 Х/ф «МЫ ИЗ ДЖАЗА» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.15 Т/с «СТРОЙКА» 16+
13.20 Х/ф «ТАЙНА «ЧЕРНЫХ ДРОЗДОВ» 12+
15.15 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
19.20 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 «Мои родные» Концерт Юты 12+
1.00 Х/ф «ЗАХОДИ - НЕ БОЙСЯ, ВЫХОДИ - НЕ ПЛАЧЬ...» 12+
2.30 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.35 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### НТРК

6.00 Х/ф "31 ИЮНЯ" 12+
9.00 Х/ф "ТЕМНЫЕ ВОДЫ" 16+
11.00 "РАСПИСАНИРЕ ÇУК ПУЙĂС". Чăвашла куçарнă фильм 12+
13.00 "Творческий вечер Валентины Двойновой" 12+
15.00 "В краю ста тысяч песен"
16.00 "Преступление и наказание". Спектакль 12+
19.30 "Юратнă хĕрарăмсем". Çурхи уяв концерчĕ 12+
22.00 Х/ф "ВЛАДЕНИЕ 18" 16+

### Наци радиовĕ

12.00, 13.00, 16.00, 19.00 - Хыпарсем (Новости) (12+)
6.00-7.00, 9.10-9.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăхăри (12+)
9.20-10.00 Чун тасалăхĕ (16+)
11.20-12.00 Мăшăр çунат (12+)
12.10-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
16.20-17.00 Чăваш Ен. Çулсем тата çынсем (12+)
18.20-19.00 Возрождение (12+)
20.20-22.00 Çичĕ юрă (12+)

* * *

Мухмăрпа аптранă арçын арăмĕнчен:
– Çĕнĕ çул иртрĕ-и?
– Иртрĕ.
– Паян миçемĕш число?
– Кăрлачăн 2-мĕшĕ.
– 1-мĕшĕ пулчĕ-и вара?

## ЭРНЕКУН, 6

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «СНЕЖНЫЙ АНГЕЛ» 12+
8.25 Х/ф «СТАРИК ХОТТАБЫЧ»
10.10 Х/ф «ЧАСТНОЕ ПИОНЕРСКОЕ»
12.10 Х/ф «СВАДЬБА В МАЛИНОВКЕ» 16+
14.00 «Голос» Финал 12+
16.10 «Голос» На самой высокой ноте» 12+
17.10 «Подмосковные вечера» 16+
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 «Кто хочет стать миллионером?»
19.55 «Поле чудес» Праздничный выпуск 16+
21.00 «Время»
21.20 Х/ф «ВСЕ СБУДЕТСЯ!» 12+
23.00 Рождество Христово. Прямая трансляция из Храма Христа Спасителя
1.00 «Оптина пустынь»
1.45 Х/ф «БАРЫШНЯ-КРЕСТЬЯНКА»
3.45 «Рождество»
4.45 «Целитель Лука» 12+

### РОССИЯ 1

5.05 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
6.45 М/ф «Маша и Медведь»
7.20 Х/ф «ВАРЕНЬКА. И В ГОРЕ, И В РАДОСТИ» 12+
11.00, 20.00 Вести
11.40 Вести. Местное время
11.55 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ» 12+
13.45 Юбилейный вечер Александра Розенбаума
16.25 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
20.55 Х/ф «ОТОГРЕЙ МОЕ СЕРДЦЕ» 12+
23.00 Рождество Христово. Прямая трансляция торжественного Рождественского богослужения
1.00 Т/ф «МОНАХ» 12+
1.40 Х/ф «СВОЙ-ЧУЖОЙ» 12+

### ЧТВ

11.40-11.55 Вести-Чувашия

### НТВ

5.05 «Жизнь как песня: «Непара» 16+
6.00 Х/ф «КИТАЙСКИЙ СЕРВИЗ» 0+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Устами младенца» 0+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.15 Т/с «СТРОЙКА» 16+
13.20 Х/ф «ЗИМНИЙ КРУИЗ» 16+
15.15 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
19.20 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 Х/ф «ЧУДО В КРЫМУ» 12+
1.10 Х/ф «ВЕТЕР СЕВЕРНЫЙ» 16+
2.50 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.50 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### НТРК

6.00 Х/ф "ГУСАРСКАЯ БАЛЛАДА" 12+
8.00 Х/ф "ДОРОГАЯ" 16+
11.30 "ТĔП УРАМПА ОРКЕСТРПА". Чăвашла куçарнă фильм
13.30 М/ф "По щучьему велению" 6+
14.30 "Азамат ушкăн концерчĕ"
17.00 Д/ф "Времени круговорот" 12+
17.30 "По острым иглам яркого огня". Айдар Хисамутдинов 12+
19.30 "ФЛЕЙТĂПА КАЛАМАЛЛИ МАНĂÇА ТУХНĂ КĔВĔ". Чăвашла куçарнă фильм 12+
22.00 Х/ф "КОГДА САНТА УПАЛ НА ЗЕМЛЮ" 16+

### Наци радиовĕ

12.00, 13.00, 16.00, 19.00 - Хыпарсем (Новости) (12+)
6.00-7.00, 9.10-9.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 22.10-23.00, 23.10-24.00 Юрă вăчăри(12+)
8.20-09.00 Чун-чĕре киленĕçĕ (12+)
10.20-11.00 Кулăш лаççи (12+)
12.10-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
16.00-17.00 Пĕччен мар (12+)
18.20-19.00 Ялтан яла (12+)
20.05-22.00 Каçхи микс (12+)

## ШĂМАТКУН, 7

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «МОЯ ЛЮБОВЬ» 12+
6.40 Х/ф «ГУСАРСКАЯ БАЛЛАДА»
8.30 Х/ф «ВАРВАРА-КРАСА, ДЛИННАЯ КОСА»
10.15 Х/ф «ЗОЛУШКА»
12.15 «Федор Конюхов. Повелитель ветра»
13.20 Юбилейный концерт Раймонда Паулса
16.10 «Богородица. Земной путь» 12+
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 «Кто хочет стать миллионером?»
20.10, 21.20 «Сочи. Роза Хутор. Рождество 2017»
21.00 «Время»
23.00 «В поисках Дон Кихота» 16+
0.00 Х/ф «ХОРОШИЙ ГОД» 16+
2.10 Х/ф «ОПТОМ ДЕШЕВЛЕ 2» 12+
3.55 Х/ф «КОРОЛЕВСКИЙ БЛЕСК» 16+

### РОССИЯ 1

4.10 Х/ф «АЛЕНКА ИЗ ПОЧИТАНКИ» 12+
7.55 «Рождественская «Песенка года»
10.10 «Сто к одному»
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.20 Рождественское интервью Святейшего Патриарха Кирилла
11.45, 14.20 Х/ф «ПТИЦА В КЛЕТКЕ» 12+
16.05, 20.35 Т/с «МОЙ ЛЮБИМЫЙ ПАПА!» 12+
0.10 Х/ф «ШКОЛА ДЛЯ ТОЛСТУШЕК» 12+

### НТВ

5.25 Х/ф «ВОЛКОДАВ» 12+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.20 VII Международный благотворительный фестиваль «Белая трость» 0+
10.15 Т/с «СТРОЙКА» 16+
13.20 Х/ф «ПРОТИВ ВСЕХ ПРАВИЛ» 16+
15.15 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
19.20 Х/ф «НАСТОЯТЕЛЬ» 16+
21.20 Х/ф «НАСТОЯТЕЛЬ-2» 16+
23.15 «Русская душа» Концерт Андрея Никольского 12+
0.45 Х/ф «ПЯТЬ ВЕЧЕРОВ» 12+
2.25 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.50 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### НТРК

6.00 Д/ф "Путь Христа" 12+
8.00 "Рождество Христово. Божественная литургия. Прямая трансляция из Покровско-Татианинского собора г. Чебоксары"
10.00 "Пехил" 12+
10.30, 22.30 "Святые места Чувашии" 12+
11.00 М/ф "Щелкунчик" 12+
11.30 "Диана и звезды чувашской эстрады" 12+
14.00 "Песни России". Всероссийский фестиваль-марафон 12+
17.30 "Храм новомучеников и исповедников российских" 12+
18.00 "Рождество Христово. Божественная литургия. Телеверсия 12+
20.00 Х/ф "НАРСПИ" 12+
23.00 Х/ф "В ЦЕНТРЕ ВНИМАНИЯ" 18+

### Наци радиовĕ

12.00, 13.00, 16.00, 19.00 - Хыпарсем (Новости) (12+)
6.00-6.20, 7.00-7.20, 8.00-8.20, 9.00-9.20, 10.00-10.20, 11.00-11.20, 14.00-14.20, 15.00-15.20, 16.00-16.20, 17.00-17.20, 18.00-18.20, 19.00-19.20, 22.00-23.00, 23.00-24.00 Юрă вăчăри (12+)
9.05-9.20 Приключения тети Моти и Софии Прекрасной (6+)
10.20-12.00 Чĕрĕлĕх çути (12+)
12.00-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
16.20-17.00 Шанчăк (12+)
18.20-19.00 Ялтан яла (12+)
20.05-22.00 Каçхи микс (12+)

## ВЫРСАРНИКУН, 8

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.45, 6.10 «Наедине со всеми» 16+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.45 Х/ф «ДВЕНАДЦАТАЯ НОЧЬ»
8.30 Х/ф «ТРИ ОРЕШКА ДЛЯ ЗОЛУШКИ»
10.15 Х/ф «МОРОЗКО»
11.40 Новый «Ералаш»
12.15 К юбилею актрисы. «Марина Неелова. «Я умею летать» 12+
13.20 Х/ф «ТЫ У МЕНЯ ОДНА» 12+
15.15 Х/ф «КИНГ КОНГ» 16+
18.45 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига. Финал 16+
21.00 «Время»
21.30 «Сочи. Роза Хутор. Творческий вечер Константина Меладзе»
0.01 Х/ф «ШЕРЛОК ХОЛМС: ШЕРЛОК ПРИ СМЕРТИ» 12+
1.50 Х/ф «СКАНДАЛЬНЫЙ ДНЕВНИК» 16+
3.35 «Модный приговор»

### РОССИЯ 1

4.20 М/ф «Снежная королева-2. Перезаморозка»
5.40 Х/ф «12 МЕСЯЦЕВ. НОВАЯ СКАЗКА»
7.35 «Сам себе режиссер»
8.20, 4.25 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.20 «Золотая магия XXI века в Крокус Сити Холле»
12.30 «Смеяться разрешается»
14.20 Х/ф «ВСЕ БУДЕТ ХОРОШО» 12+
18.00 Х/ф «КУЗНЕЦ МОЕГО СЧАСТЬЯ» 12+
20.35 Новогодний Голубой огонек-2017
0.30 Х/ф «ДЕРЕВЕНСКИЙ РОМАНС» 12+

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События года

### НТВ

5.25 «Жизнь как песня: Сергей Чумаков» 16+
6.20 Х/ф «КО МНЕ, МУХТАР!» 0+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.20 «Счастливое утро» 0+
9.25 Едим дома 0+
10.15 Т/с «СТРОЙКА» 16+
12.10 Ты не поверишь! 16+
13.20 Х/ф «ВЕТЕР СЕВЕРНЫЙ» 16+
15.15 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
19.20 Х/ф «ПОСРЕДНИК» 16+
23.15 «Live in Kremlin» Юбилейный концерт Валерии 12+
1.35 «Бывает же такое!» 16+
2.00 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.25 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### НТРК

6.00 Х/ф "РУСЛАН И ЛЮДМИЛА" 12+
9.00 Х/ф "ЛУЧШЕЕ ЛЕТО В НАШЕЙ ЖИЗНИ" 16+
12.30 "Виктор Петров култарать, 60 çул та тултарать!" Юбилей концерчĕ 12+
15.00 "Албена юратăвĕ". Спектакль 16+
17.30 "Земляки" 16+
18.30 "25 те 25". Стас Владимиров концерчĕ 12+
21.00 "ПĔРРЕХИНЧЕ 20 ÇУЛ ИРТСЕН". Чăвашла куçарнă фильм 12+
23.00 Х/ф "НЕСНОСНЫЕ ЛЕДИ" 18+

### Наци радиовĕ

6.00-6.20, 7.00-7.20, 8.00-9.00, 9.10-9.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.00-19.00, 22.00-23.00, 23.00-24.00 Юрă вăчăри (12+)
9.20-10.00 Шурăмпуç (12+)
11.20-12.00 Ачалăх урхамахĕ
12.00-15.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
17.20-18.00 Тăван ăс-хакăл
18.20-19.00 Ялтан яла (12+)
20.05-22.00 Каçхи микс (12+)

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 29.12 | 30.12 | 31.12 | 1.01 | 2.01 | 3.01 | 4.01 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2-4 сехетре | -9 | -5 | -3 | 0 | -3 | -14 | -18 |
| | 14-16 сехетре | -3 | -4 | -4 | +1 | +1 | -3 | -14 |
| Юр çăвать | | | | | | | | |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 763 | 761 | 750 | 744 | 738 | 740 | 742 |

## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ



carikatura.ru сайтран илнĕ





Хаçатăн черетлĕ номерĕ 2017 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче тухать.